www.tavanen.ru
# Тăван Ен
плюс Причебоксарье


Сцена çинчи ăмăрт кайăк

**Казах çĕрĕ çинче чăваш чӳкĕ**
СУЛ ÇӲРЕВ → 4

**Сурăхсене шампуньпе çăвасçĕ**
УЯВ → 3

**«Кăвак берета» тивĕçлисем**
КАЛЕНДАРЬТИ КУН → 6

№ 30 (10577-10578) • АВГУСТĂН 4-МĔШĔ • 2017 • ЭРНЕКУНСЕРЕН ТУХАТЬ
Хакĕ ирĕклĕ
Хаçат 1932-мĕш çулхи июлĕн 27-мĕшĕнчен тухса тăрать

• ЯЛ ХУÇАЛĂХĔ


С.Ванюшкинпа Ю.Алякин Илем кунĕнче çĕр улми кăларса пăхрĕç
В. Шумилова сăн ӳкерчĕкĕ

# Пысăк çухатусемсĕр

## Хĕрӳ ĕççи мĕн хатĕрлет?

**Витререн тăкнă пек çуса тăракан çумăрпа, кассăн-кассăн пырса çапакан пăрпа, хытă çилпе – çакăн пек пулăмсемпе тĕлĕнтерет кăçал çанталăк. Çак условисенче хресчен ытларах шар курать – çуркунне пысăк шанăçпа акса-лартса хăварнă тыр-пулпа пахча çимĕç хăйĕн тухăçлăхĕпе савăнтарĕ-и? Ăна пысăк çухатусемсĕр мĕнле пухса кĕртмелле? Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ял хуçалăх культурисем вăй илсе аталаннă тапхăрта çĕр йĕпе тăнине пула Чăваш Енре чрезвычайлă лару-тăру йĕркине çирĕплетни çинчен йышăну кăларнă.**

### Тухăç чакма пултарать

Çитĕнтернĕ тыр-пула тата пахча çимĕçе çумăр çусах тăнă условисенче пухса кĕртес ыйтăва Пуçлăх ĕç тăвакан влаç органĕсен тата муниципалитетсен ертӳçисемпе тунтикунсерен иртterекен планеркăра та хускатнă. Ял хуçалăх министрĕ Сергей Артамонов çанталăка пула çур аки ĕçĕсене каярах иртternине, çакă тыр-пула пуçтарса илес вăхăта витĕм кӳнине палăртнă. Çу кунĕсем те типĕ пулмарĕç кăçал, çумăр çусах тăнăран нӳрĕкĕн вăтам кăтартăвĕ нормăран самай ытларах. Паян та çумăр çусах тăрать, тăпра нӳрĕ, вырăн-вырăн анасем çинче, йăрансен хушшинче шыв. Çак условисенче пур культура та пиçсе çитейĕ-и – хальлĕхе калама йывăр. Çĕр улмишĕн те хăрушлăх пĕчĕк мар, тĕш тырăсем те çапса çăвакан çумăрпа пăра, вăйлă çиле пула выртса хуралма пултарасçĕ. Тăпрари нӳрĕк виçи пысăк пулнăран тыр-пул, пахча çимĕç тухăçĕ чакма, çĕрме пултарать.

Паянхи куна Атăлçи федераци округĕнчи 8 регионта тыр-пула пуçтарма тухнă. «Ĕççи республикăн кăнтăр енчи районĕсенче вăтамран 21 кун кая юлса пуçланать, çурçĕр енче вара тата ытларах – 25-27 кун», – палăртнă Сергей Артамонов. Елчĕк районĕнче çак кунсенче пăрçа çулма тухнă, çапла вара йывăррăн пулсан та вырма пуçланчĕ теме пулать.

Россельхозцентрăн Чăваш Енри уйрăмĕн кăтартăвĕсемпе, уй-хирсенче тырпул выртса пĕтнĕ. Айлăм вырăнсенче шыв тăни те вырма вăхăтĕнче ура хума пултарать. Нӳрĕк виçи пысăккипех тырăллă тата пăрçаллă культурăсем, пахча çимĕç, нумай çул ӳсекен курăк, йывăç-тĕм çинче сиенлĕ хурт-кăпшанкă аталанса вăй илет.

Михаил Игнатьев чрезвычайлă лару-тăрупа çыхăннă çухатусене чакарас тĕллевпе мероприятисен планне çирĕп йĕркелеме хушнă. «Кашни сехет хаклă. Влаç органĕсен хресченсене çитĕнтернĕ тыр-пулпа пахча çимĕçе пысăк çухатусемсĕр пухса кĕртме пулăшмалла», – чĕнсе калана вăл. Пуçлăх тĕллевсене те палăртнă, çав шутра – тырă типĕтмелли агрегатсене талăкĕпех ĕçлеттерме хатĕрлесси, пиçсе çитеймен тырăллă тата пăрçаллă культурăсене, кукурусса, хĕвелçаврăнăша выльăх апачĕ çине куçарасси.

### Чечекре кăна

Шупашкар районĕнче пахча çимĕç пысăк калăпăшпа ӳстерекен хуçалăхсенчен пĕри – Шемшер енчи «Элис» ООО. Çак условисем еплерех витĕм кӳнĕ çĕр улмие? Уй-хир ĕçĕсемпе паллашма виçĕмкун райадминистрацин ял хуçалăх тата экологи уйрăмĕн пуçлăхĕ Сергей Ванюшкин çула тухрĕ.

→ 2

## • РЕСПУБЛИКĂРА

Федерацин Атăлçи тăрăхĕнчи Совет Союзĕн Геройĕ А.В. Кочетов ячĕллĕ Чăваш кадет корпусĕн пĕрремĕш чулне августăн 8-мĕшĕнче хума палăртнă. Вĕрентӳ учрежденийĕн Попечитель канашĕн июль уйăхĕн вĕçĕнче иртнĕ ларăвĕнче Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев – вăлах Раççей Президенчĕн федерацин Атăлçи округĕнчи полномочиллĕ представителĕпе Игорь Паншинпа пĕрле канаш председателĕ – çакăн пирки канаш членĕсемпе калаçса татăлнăччĕ. Ун чухнех Михаил Васильевич Раççей Федерацийĕн оборона министрĕ Сергей Шойгу, çĕршыв президенчĕн Атăлçи округĕнчи полпречĕ Михаил Бабич ячĕпе тав сăмахĕ каланă. Шăпах вĕсем пулăшнипе уйăх каялла федераци ведомствинче Чăваш Енри кадет корпусĕн строительствине пулăшма тата çар техникипе тивĕçтерме тăватă енлĕ килĕшĕве алă пуснă. ГК «РЕНОВА» председателĕ Виктор Вексельберг та корпуса паянах шефа илме хатĕррине пĕлтернĕ.

Чăваш Ен çамрăк армеецсен «Зарница» тата «Орленок» республикăри финал вăййисене ирттерес йăлана сыхласа хăварнă, Раççейри пĕртен-пĕр ача-пăча полици академийĕ те вунă çул ытла – Чăваш Енре. «Гвардеец» оборонăпа спорт лагерĕ те – Михаил Бабич полпред сĕннипе пурнăçланакан пĕлтерĕшлĕ проект шутĕнчех. Михаил Игнатьев августăн 1-мĕшĕнче «Гвардеец-1» членĕсемпе ЧР Çар мухтавĕн музейĕнче тĕл пулнă.

## ТЕ СĔНЕТ

### Йӳнĕрех хакпа çырăнма ĕлкĕрер!

**Августăн 31-мĕшĕччен Раççей почтин уйрăмĕсенче пичет кăларăмĕсене 2018 çулти 1-мĕш çур çуллăха валли 2017 çулхи 2-мĕш çур çуллăх хакĕсемпех çырăнса илме май пур.**

**Çак хушăра регионри пичет кăларăмĕсен экспертлă канашĕ сĕннĕ списока кĕнĕ кăларăмсене Раççей почти хăйĕн каталогĕ тăрăх 25%, альтернативлă çырăнтару агентствисен каталогĕсем тăрăх 20% йӳнĕрех çырăнтарать. Вĕсен йышне 2500 кăларăм кĕнĕ. Çав шутра – «Тăван Ен» хаçат та. Пичет кăларăмне почта уйрăмĕсенчех илсе тăрас текенсен ăна 10% йӳнĕрех хакпа çырăнма май пур.**

*«Тăван Енсĕр» тăвансăр пекех*



Иван СМИРНОВ, Хураçырма

# Кун йĕркинче



**Светлана АРИСТОВА,**
Чăваш Республикин контрольпе шутлав палатин председателĕ:

– Республикăра укçа-тенкĕпе ĕçлекен специалистсен ăсталăхĕ çӳллĕ шайра, йĕркене пăснипе çыхăннă пысăк çитменлĕхсене тупса палăртман. Эпир 42 млрд тенке тĕрĕслерĕмĕр – кăлтăксем 1%-ран иртмеççĕ. Укçа-тенке тĕллевсĕр усă курнă тĕслĕхсем те пĕрре е ытларах кăна.

**КĂÇАЛ ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН КОНТРОЛЬПЕ ШУТЛАВ ПАЛАТИ 41 ТĔРĔСЛЕВ МЕРОПРИЯТИЙĔ ВĂХĂТĔНЧЕ ХАЛĂХШĂН ПĔЛТЕРĔШЛĔ ПРОГРАММĂСЕНЕ** – граждансене авариллĕ кивĕ çурт-йĕртен куçарассине, пĕчĕк тата вăтам предпринимательлĕхе субсидипе тивĕçтерессине, шкулсене капиталлă юсассине – тишкерессине тĕпе хунă. Ытларикун палата председателĕпе Светлана Аристовăпа тĕл пулнă май Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ăна пурнăçланакан патшалăх тата муниципалитет программисен пĕлтерĕшлĕ кăтартăвĕсене объективлă хак панăшăн тав тунă. «Укçа-тенке пайласа паракансен унпа çыхăннă пур ĕçе те халăх умĕнче, уççăн ирттермелле. Уйрăм тĕслĕхсенче тупса палăртнă çитменлĕхсемшĕн должноçри çынсене явап тыттарма информацие прокуратурăна эсир çитеретĕр», – палăртнă вăл. Аристова пĕлтернĕ тăрăх, граждансене аварийллĕ çурт-йĕртен куçарас программăн 3-мĕш тапхăрĕнче палăртнинчен 3 пин тăваткал метр ытларах çурт-йĕрпе тивĕçтерĕç. «859 çемье пурăнмалли çĕнĕ кĕтеслĕ пулнă, тĕрĕссипе вара 927-шне куçармалла», – палăртнă председатель. Йывăрлăхсем пур, укçа-тенке усă курас тĕлĕшĕнче йăнăшнă муниципалитетсен хушшинче вăл Шупашкар районне асăнман. ■

**ЦИФРĂСЕН ЧĔЛХИПЕ**

2017 çулта ЧР Контрольпе шутлав палати тупса палăртнă çитменлĕхсем тăрăх бюджета укçа-тенкĕн

**37%**

таврăнă.

• ÇИВĔЧ ЫЙТУ

## Правительство предприятие хупма ирĕк памĕ



**Çак тапхăрта пысăк йывăрлăх тӳсекен «Чувашский бройлер» кайăк-кĕшĕк предприятийĕнче ертӳçĕсем пĕрин хыççăн тепри ылмашăнаççĕ.**

Республикăри ăнăçлă ĕçлесе пынă предприятире лару-тăру чăн та çăмăл мар. Январь-май уйăхĕсенчи кăтарту тăрăх, предприятин суту-илӳ тупăшĕ 55 пин тенкĕпе танлашнă, ку вăл пĕлтĕрхи асăннă тапхăрпа танлаштарсан 5 хут сахалрах. Çав вăхăтрах парăмсем ӳссех пыраççĕ. Вăхăтлăх управляющи Игорь Алимов ыйтнипе Чăваш Енĕн Арбитраж сучĕ çулталăка яхăн директор пуканне йышăннă Игорь Мяснянкина ĕçрен хăтарма йышăннă. Ăна предприятие ятарласа банкрота кăларнăшăн айăпласа уголовлă ĕç пуçарнă – çакăн пирки Раççей следстви комитечĕн Республикăри следстви управленийĕ пĕлтерет.

ЧР Арбитраж сучĕн йышăнăвĕпе предприятин директор тивĕçĕсене хальлĕхе Валентина Михайлова тĕп бухгалтер пурнăçлать.

Республика правительстви регионри агропромышленноç комплексĕшĕн пĕлтерĕшлĕ предприятие – унти ĕç вырăнĕсене, кайăк-кĕшĕк шутне – сыхласа хăварма çул-йĕр шырать. ■

# Юсав ĕçĕсем хĕрӳ



• ÇУРТ-ЙĔР

**Чăваш Республикинчи нумай хваттерлĕ çуртсенчи пурте усă куракан пурлăха 2014-2043 çулсенче тĕпрен юсас программăпа çыхăннă ыйтăва Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев июлĕн 31-мĕшĕнче Министрсен Кабинечĕн членĕсемпе, федераци ведомствисен территорири органĕсен тата муниципалитетсен ертӳçисемпе ирттернĕ планеркăра сӳтсе явнă.**

ЧР строительство, архитектура тата пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх министрĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Максим Иванов 2014-2016 çулсенче республикăра 1630,75 тăваткал метр лаптăклă 80,06 пин çын пурăнакан 816 нумай хваттерлĕ çуртра тĕплĕ юсав ирттерни çинчен пĕлтернĕ. Унпа килĕшӳллĕн 1337 ĕç пурнăçланă. Çак икĕ çулта кĕске вăхăтра пурнăçламалли плансене пурнăçа кĕртме 917,76 млн тенкĕ уйăрнă.

**СĂМАХ МАЙ**

**2015 çулта районта нумай хваттерлĕ 13 çуртра 31203,99 тăваткал метр лаптăк çинче 7151997,08 тенкĕлĕх юсав ĕçĕсем ирттернĕ, 2016 çулта 27 нумай хваттерлĕ çуртра 46663,85 тăваткал метрлă лаптăк çинче – 20969962,00 тенкĕлĕх. 2018-2019 çулсенче районти 28 нумай хваттерлĕ çуртра тĕплĕ юсавсем ирттерме планланă.**

Хальхи вăхăтра республикăра ЧР Министрсен Кабинечĕн йышăнăвĕпе 2016 çулхи декабрĕн 5-мĕшĕнче çирĕплетнĕ 499-мĕш хушупа нумай хваттерлĕ çуртсенче пурте усă куракан пурлăха юсассипе кĕске вăхăтра тумалли плана пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Унпа килĕшӳллĕн 33,65 пин çын пурăнакан 765,84 тăваткал метрлă нумай хваттерлĕ 273 çуртри пурте усă куракан пурлăха юсама палăртнă. Кунта лифт, канализаци тата шыв кăлармалли, вĕри шывпа, сивĕ шывпа, ăшăпа, газпа тивĕçтермелли тытăмсене, çурт тăррисене, путвалсене, çуртăн мал енĕсене юсас ĕçсем кĕреççĕ. Çакна валли 887,91 млн тенкĕ уйăрнă.

Кăçалхи январь-февраль уйăхĕсенче Шупашкар районĕнчи 10 çуртра юсав ĕçĕсене 8269036,97 тенкĕлĕх пурнăçланă. Райадминистрацин çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх пайĕн пуçлăхĕ Геннадий Ефимов пĕлтернĕ тăрăх, кăçалхи август-сентябрь уйăхĕсенче районти 14 нумай хваттерлĕ çуртра – Кӳкеçри Советская урамри 16-мĕш, 51-мĕш, 52-мĕш, 53-мĕш, 55-мĕш çуртсенче, Шоршелская урамри 3-мĕш çуртра, «30 лет Победы» урамри 56-мĕш çуртра, Çĕнĕ Тутаркасси поселокĕнчи Парковая урамри 3-мĕш çуртра, «70 лет Октября» урамри 9-мĕш çуртра, 23-мĕш çуртра, Ишлей салинчи Лесная урамри 4-мĕш çуртра, Совхозная урамри 1-мĕш çуртра, Çĕнъял салинчи Центральная урамри 1-мĕш çуртра, 2-мĕш çуртра – тĕплĕ юсав ĕçĕсене ирттермелле. 14421,05 тăваткал метрлă пурăнмалли çурта юсама 14258256, 43 тенкĕ уйăрнă.

■ **АНЖЕЛИКА ТИХОНОВА**

# Пысăк çухатусемсĕр

• ЯЛ ХУÇАЛĂХĔ

Хуçалăхăн уй-хирĕнче тĕрлĕ сортлă «иккĕмĕш çăкăр» выран тупнă кунта: «Импала», «Беллароза», «Удача», «Невский» тата ытти те. «Кăçал çĕр улмие июнь уйăхĕн варринче кăна лартса пĕтертĕмĕр, çавăнпа халĕ чечекре кăна-ха», – паллаштарать предприяти ертӳçи Юрий Алякин уй-хир ĕçĕсемпе. Чăнах та, уй-хирте çĕр улми шап-шурă, кăвакрах-хĕрлĕ чечек айĕнче. Паркан ларакан калча илемĕпе илĕртет. «Часчасах çуса тăракан çумăр витĕм кӳрет-и пахча çимĕçе?» – ыйтрăмăр унран. «Виçĕ çул шăрăх çанталăк тăчĕ, йĕри-тавра çумăр çăвать, çĕр улми патне çитеймест. Кăçал 3 çулшăн план тултарчĕ, мĕн лартни пĕтĕмпех шăтса тухрĕ», – шӳтленĕ евĕр каласа парать хуçалăх ертӳçи. Анчах айлăмрах вырăнсенче шыв тăрать иккен, унта çĕр улмие чĕрме май килмен. Çĕре кăпкалатса тăни пĕлтерĕшлĕ иккен, çĕр улмие аталанма сывлăш кирлĕ.

Чечекре ларакан çĕр улмин тĕрлĕ сортне кăларса пăхрăмăр. Чи малтан «Невский» ал айне лекрĕ. Чăх çăмарти, хушăран хур çăмарти евĕрлисем те курăнчĕç, тинтерех тытăннисем йышлăччĕ. «Финнсем туса кăларнă селекци сорчĕ, çĕнетнĕ сорт. Вăл пахалăхĕ енчен аванрах, «куçĕсем» хĕрлĕрех пулнипе уйăратăп», – паллаштарчĕ сортпа Юрий Васильевич.

«Импала» – ир пулакан çĕр улми. Тăрăхласкерне, шап-шурăскерне аякранах килсе туянаççĕ. Анчах унăн çулçисем çинче хăмăр-хăмăр пăнчăсемпе пысăкрах лаптăксем пур. «Фитофторозпа е альтернариозпа чирлеме тытăннă. «Импалăн» иммунитет начартарах, ытти сортпа танлаштарсан черченрех. Чирчĕр тымар çимĕçе те витĕм кӳме пултарать. Вăл тӳрех курăнмасть, хĕл каçарма хурсан кăна улма çинче хура пăнчăсем палăрма тытăнаççĕ», – ăнлантарать хуçалăх ертӳçи. Кăвак чечеклĕ «Колеттăна» та, «Удачăна» та – пĕтĕмпех кăларса пăхрăмăр эпир. «Колеттăн» пĕр тĕмĕнчен 32 çĕр улми тухнине ас тăватăп. Ăна ăшаласа çиме аван, тем чул пĕçерсен те ирĕлсе каймасть», – кашни сорт пирки нумай каласа пама пултарать Юрий Алякин. Вăл августăн 20-мĕшĕсенче ир пулакан çĕр улмие пуçтарма тухас тĕллевлине палăртрĕ. «Унччен пахча çимĕç ӳссе çитетех, çанталăкĕ кăна йĕркелентĕрччĕ», – шанчăка çухатманни курăнать ертӳçĕ сăмахĕсенче.

## Çимелĕх пуласса шанаççĕ

«Элис» ООО уй-хирĕсенче çĕр улми çеçкисем сип-симĕс, нумайăшĕ чечекре пулсан, пахчара «иккĕмĕш çăкăра» лартса ӳстерекенсенчен хăшĕ-пĕрин çеçки типме пуçлани çинчен калакалать. «Çуркунне çĕр хăвăрт пиçсе çитейменрен пахча çимĕçе каярах лартма тиврĕ. Кайран сулхăн çанталăка пула хăвăрт шăтса тухаймарĕ, йĕпе тăнăран вăхăтра çумласа купалаймарăмăр. Кăларса пăхрăмăр – тухăç савăнтармарĕ. Кишĕр, кăшман, ыхра аптăрамаççĕ, сухан вĕтĕрех, хăяр та йышлах мар, помидорсене фитофтор пĕтернĕ. Кăçал мĕнле хĕл каçăпăр-ши», – пăшăрханаççĕ район çыннисем. Эпир вĕсен шухăшне ыйтса пĕлтĕмĕр.

Теприсем вара çĕр улми тухăçлă пуласса шанаççĕ, тăпрари нӳрĕк виçи пысăк пулнăран çĕрме тытăнасран кăна шикленеççĕ. «Унта-кунта пĕчĕк ача чăмăрĕнчен пысăкраххисем те тĕл пулаççĕ, анчах çĕр тачка, кĕреçепе пусма та çук. Тен, пирĕн тăрăхри тăпра тытăмĕ çавăн пекрех. Кăçал çимелĕх туса илетпĕрех пулĕ, сутлăх пулĕ-ши, калама йывăр», – чунне уçать пахча çимĕçе ытти çул сутмалăх та туса илекен Çĕньялти пĕр çемье.

Чăваш Ен Пуçлăхĕ хуласенче пурăнакансене экологи енчен таса, пахалăхлă пахча çимĕçпе тивĕçтерес тĕллевпе канмалли кун ярмăрккисене йĕркелеме сĕннĕ. Унта çынсем ял хуçалăх таварне ăна туса илекенсенчен тӳрех туянма пултарĕç – ку пек тавар ытлашши тăкаксăр, экологи тĕлĕшĕнчен таса.

■ **ДЕОМИД ВАСИЛЬЕВ**

**СĂМАХ МАЙ**

**Республикăри «Агро-Инновации» КУП кăтартăвĕсемпе август уйăхĕн пуçламăшĕ тĕлне пахча çимĕç хакĕсем çапла йĕркеленнĕ: лавккасенче çĕр улмие 24,9-33,1, пасарта 30-40 тенкĕпе сутăн илме пулать, купăста лавккара – 13,7-26,9 (пасарта – 18-35 тенкĕ), хĕрлĕ кăшман – 21,9-32,9 (30-45 тенкĕ), кишĕр – 39,9-52,9 (40-50 тенкĕ), сухан – 35,9-51,9 (38-45 тенкĕ), хăяр – 49,9-80 (40-75 тенкĕ), помидор – 59,9-129,9 (50-120 тенкĕ), ыхра – 149,9-319,9 (250-350 тенкĕ) тăрать. Пасарсенче курттăммăн туянас тесен килограмм çĕр улмишĕн 18-25 тенкĕ, купăсташăн 9-16 тенкĕ, хĕрлĕ кăшманшăн 18-20 тенкĕ, кишĕршĕн 28-35 тенкĕ, суханшăн 27-35 тенкĕ тăкаклама тивĕ.**

ЦИФРĂСЕМПЕ ФАКТСЕМ

Авгусăн 2-мĕшĕнче райадминистрацинче çул çитменнисен ĕçĕсемпе тата вĕсен прависене хÿтĕлессипе ĕçлекен комисси ларăвĕнче ашшĕ-амăшĕ тата çул çитменнисен тĕлĕшĕпе

**9 ĕç**

пăхса тухнă. Ашшĕ-амăшĕ эрех-сăрапа иртĕхнипе ачисене пăхса усрассипе, вĕрентессипе тата воспитани параssипе тивĕçĕсене кирлĕ шайра пурнăçламан тĕслĕхсем ÿсни паллă.

**ШУПАШКАР РАЙОНĔНЧЕ КĂÇАЛХИ ÇИЧĔ УЙĂХРА ИРТНĔ ÇУЛТИ ÇАК ТАПХĂРПА ТАНЛАШТАРСАН АВАРИСЕН ШУЧĔ** 67-рен 64 таран чакнă, вилнисен шучĕ – 7-рен 6 таран, суранланнисен – 99-тан 92 таран. Кунпа пĕрлех çуран çÿрекенсен айăпĕпе пулнă инкексен шучĕ 6-ран 8 таран ÿснĕ. Ÿсĕр водительсене пула сиксе тухнă аварисен шучĕ 6-ран 1 таран чакнă. ■

**РФ ПЕНСИ ФОНЧĔН ШУПАШКАР РАЙОНĔНЧИ УЙРĂМНЕ** июнь уйăхĕ пуçламăшĕнче пенсие çĕнĕрен шутласа памашкăн пенсионерсенчен 2957 заявлени пулнă. Маларах пенсие шутласа панă чухне ачана 1,5 çул тултариччен пăхнă тапхăра стажа кĕртнĕ, халĕ вĕсене пенси балĕсемпе те шутлама пулать. ■

**ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧЕ ИЮЛĔН 24-МĔШĔНЧЕН ПУÇЛАСА АВГУСТĂН 1-МĔШĔСЕНЧЕ «МОТО» РЕЙД ИРТНĔ.** Çак хушăра районта мотоциклпа, мопедпа, скутерпа çÿрекен 18 водителе чарнă. Июлĕн 24-мĕшĕнче Кÿкеçре çурçĕр çитеспе 15 çулти çамрăк инспекторсен куçĕ тĕлне пулнă. Çĕнъял тăрăхĕнчен тепĕр водитель мотоциклпа мотошлемсăр, транспорт хатĕрĕпе çÿреме ирĕк паракан правасăр трасса çине ярăнма тухнă. ■

**ЧĂВАШСТАТ ПĔЛТЕРНĔ ТĂРĂХ,** Шупашкар районне кăçалхи çур çулта 1214 çын пурăнма килнĕ (пĕлтĕрхи çак тапхăрта – 1313), куçса кайнă – 1062 çын (пĕлтĕр – 1251). Миграци ÿсĕмĕ 152 çынпа танлашать (иртнĕ çулта – 62). ■



## ● РЕСПУБЛИКĂРА

**Шупашкарти йăлари хытă каяшсен санкциленĕ свалкине рекультивацилеме уйăрнă укçа-тенке усă курас ыйтăва Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ведомство ертÿçисемпе тунтикунсерен иртterекен канашлура сÿтсе явнă.** Чăваш Республикин çут çанталăк ресурсĕпе экологи министерстви çĕршыв ведомствипе килĕшÿ тунă – ун тăрăх проекта пурнăçа кĕртме кăçал 122,5 млн уйăрмалла. «Шупашкар хула администрацийĕ конкурс ĕçне тухăçлă иртterменнипе «Таса çĕршыв» приоритетлă проекта пурнăçа кĕртме хĕн, патшалăх контрактне те йĕркелемен», – палăртнă Чăваш Республикин çут çанталăкпа экологи министрĕ Александр Коршунов. Тĕрлĕ çăхава пула аукцион процедурине пĕр хутчен кăна мар пăрахăçлама лекнĕ. Конкурса хутшăнайман организацисем çакăн пек майпа ура хураççĕ.

«Контрактсене сентябрĕн 1-мĕшĕччен йĕркелесе çитермелле. Унсăрăн укçа-тенке федераци бюджетне тавăрса пама тивет», – çирĕп асăрхаттарнă Чăваш Ен Пуçлăхĕ. ■

## ● РАЙОНТА

**Чăваш Енре куçман пурлăхăн усă курман объекчĕсене тупса палăртассипе иртекен «Халăх инвентаризацийĕ» акци малалла тăсăлать. 2017 çулхи августăн 3-мĕшĕ тĕлне районта çакăн пек 25 объект (вĕсенчен 4-шне – çынсем кăтартнипе) тупса палăртнă. Çакă паллă: 7 объект – муниципаллă харпăрлăхра, 11-шĕ – ахаль çынсен пурлăхĕ шутланать, 7-шĕн – хуçи çук.**

Райадминистраци район çыннисене акцие хастар хутшăнма ыйтать. Район территорийĕнчи усă курман объектсем çинчен информацие çак адреспа: Чăваш Республики, Шупашкар районĕ, Кÿкеç поселокĕ, Шоссейная урам, 9-мĕш çурт, 5а кабинет, экономика, харпăрлăх тата çĕр хутшăнăвĕсен уйрăмне çитерме пултаратăр. 8 (83540)2-50-77 телефонпа шăнкăравласа та пĕлтерме пулать. Çырусене checonom4@cap.ru электронлă почтăпа та яма юрать. ■

## ● ПРОКУРАТУРА ПĔЛТЕРЕТ

**Шупашкар районĕнче пурăнакан çын тĕлĕшĕпе Интернет сетĕнче экстремистла сĕмлĕ материалсене вырнаçтарнăшăн пуçарнă уголовлă ĕçпе приговор йышăннă.**

Августăн 2-мĕшĕнче Шупашкар район сучĕ Çĕнĕ Тутаркасси ялĕнче пурăнакан 28 çулти çын тĕлĕшĕпе пуçарнă уголовлă ĕçпе приговор кăларнă. Н. РФ УК 282 статйипе (1-мĕш пай) (халăх умĕнче курайманлăх тата хирĕçÿ çуратакан ĕç-пуçсем туни, çавăн пекех çыннăн е темиçе çыннăн тивĕçне национальноç палăрăмĕсем тата хăш рассăна кĕнине пăхса мăшкăлласа чакарни) айăплă тесе йышăннă.

2016 çулта декабрĕн 1-мĕшĕнче тата 29-мĕшĕнче Н. хăйĕн килĕнчен Интернетра пĕр социаллă сетьри хăйĕн аккаунтĕнче наци тата рассăсен хушшинче курайманлăха, хирĕçтăрăва тата ютшăнулăха çуратакан экстремистла сĕмлĕ аудиозаписьсем вырнаçтарнине палăртнă.

Судра уголовлă ĕçе пăхса тухнă чухне Н. хăйĕн айĕпне туллин йышăннă. Суд, патшалăх айăплавçин шухăшĕпе килĕшсе ăна пĕр çул та ултă уйăх сăнав срокĕпе условнăй майпа икĕ çуллăха ирĕкрен хăтарма йышăннă. Приговор законлă вăя кĕмен. ■

# Фонтанлă, аллейăллă, мирлештерекен тенкеллĕ



Фонтанпа ачасем те, аслисем те кăмăллă

Янăш ялĕнче культурăпа кану паркĕ уçăлчĕ

• УЯВ

**Ялсен историйĕ сăнланнă стендсем, ача-пăча площадки, чăрлаттарса сас паракан пысăках мар фонтан, йывăç сулхăнĕнче ларса канмалли тенкелсем, уявсем иртtermелли сцена – акă мĕнпе илĕртсе тăрать çак кунсенче Янăш ялĕнче уçăлнă канупа культура паркĕ.**

### Истори сăнланнă

Унсăр пуçне тин çеç çемье çавăрнă мăшăра кунта Юратакансен аллейи кĕтет. Юратакансен кĕперĕ çинче ятарлă çăрасем çакма пулать, хирĕçсе каякансене валли мирлештерекен сак пур. Илемлĕ вырăнсем сăн ÿкерĕнме кăмăллакансене валли те меллĕ. Темиçе çул каялла ретĕн-ретĕн лартнă хурăнсемпе хырсем те чухах, парка илем кÿреççĕ.

Культурăпа кану паркне Акатуй тĕлнех йĕркеленĕ. Аса илтерер: ял тăрăхĕсен хушшинчи экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕн ăмăртăвĕн пĕтĕмлетĕвĕсем тăрăх Янăш ял тăрăхĕ малти вырăна çĕнсе илсе хăйсен патĕнче районăн чи пĕлтерĕшлĕ уявне иртterме тивĕçрĕ. Райадминистраци уйăрнă укçа-тенкĕн пысăках мар пайĕ культурăпа кану паркне йĕркелеме тăкакланнă та.



Çамрăк мăшăр телейпе çиçет



Нумай ачаллисене – сертификат

В. Шумилова сăн ÿкерчĕкĕсем

Паркра ял тăрăхне кĕрекен кашни ял историне халалланă стендсем вырăн тупнă. Кĕçĕн Турхан кинемейĕсем вĕсемпе паллашнă май хăйсене асăрхарĕç. 1960 çулсен вĕçĕнче тунă сăн ÿкерчĕкре аллисене пĕчĕк путек тытнă 3 çамрăк хĕрарăм сăнланнă. Вĕсем – Манефа Смирнова, Анастасия Филиппова тата Валентина Николаева. 40 çула яхăн фермăра вăй хунă Манефа Смирнован аса илмелли самаях. «17 çулта 9 класс пĕтерсен сурăх фермине кайса кĕтĕм. Анне чирлесе ÿкнĕрен 10-мĕш класра 25 кун кăна вĕрентĕм, кайран фермăра ĕçленĕ вăхăтра каçхи шкула пĕтертĕм. Учительсем пире фермăна килсех пĕлÿ паратчĕç», – аса илÿ çăмхине сÿтет пенси çулĕнчи кинемей. «Прогресс» хуçалăх цигай ăратлă сурăхсене ĕрчетнĕ ун чухне, хĕрарăмсем ас тăваssа, 360 пăранламалли сурăх, çĕршер такапа путек ÿстернĕ. «Сурăхсене куравсене илсе тухас умĕн шампуньпе çуса тасататтăмăр», – сăмах хушаççĕ иртнĕ çулсене аса илсе юнашар тăракансем. Алăпа çăм каснине те, çак ĕçе бригада ĕçченĕсене явăçтарнине те, миçе килограмм çăм каснине кура укçа-тенкĕ тÿленине те паянхи пекех ас тăваççĕ вĕсем. Мускавра тухса тăракан «Ветеринари» журналта хуçалăхри ĕçсене сăнлакан сăн ÿкерчĕксем пичетленни те куç умĕнчех.

### Сертификатлă пулчĕç

Культурăпа кану паркне кĕмелли хăйăва касма райадминистраци пуçлăхĕн тивĕçĕсене пурнăçлакан Зоя Маслова, ял тăрăх пуçлăхĕ Иван Грачев тата ялти ача-пăча хутшăнчĕç. «Çул уçă, пурне те шала иртме чĕнетпĕр!» – йыхравларĕ пухăннă халăха ял тăрăх пуçлăхĕ. Ял çыннисемпе хăнасем ÿкĕтлеттермерĕç, илемлĕ вырăнсемпе паллашма, пĕчĕккисем ача-пăча площадкинче выляма васкарĕç. Фонтан патĕнче те ача-пăча хĕвĕшрĕ кăна, аслăраххисем шăрăх çанталăкра аллисемпе пите йĕпетрĕç.

Сцена çинчен Иван Грачев сăмах илчĕ. «Парка аталантарса пыма тăрăшмалла, çынсен çакăнта лайăх кăмăл-туйăмпа килсе çÿремелле, кунта чунпа канмалла пултăр», – терĕ вăл. «Ял тата ытларах илемленсе пыни курăнать. Эпир хамăр ачасене хамăр тĕслĕхпе яла юратма, хăтлăх кĕртме вĕрентетпĕр. Кану паркĕ çамрăксен те, ваттисен те чи юратнă вырăнĕ пултăр», – ырă сунчĕ Зоя Маслова.

Савăнăçлă лару-тăрура нумай ачаллă Никифоровсен, Пушковсен, Ивановсен тата Морозовсен çемйисене сертификатсем пачĕç. Виçшер ача ÿстерекенсем хушма хуçалăх тытма е кил-çурт хăпартма çĕр лаптăкĕсене тивĕçрĕç.

### Пахчари çума пăхмасăр

Сцена çине ял тăрăх пурнăçне хастар хутшăнакансене пĕрин хыççăн теприне чĕнечĕне кăларса район тата ял тăрăх администрацийĕн Тав хучĕсемпе чысларĕç. Хисепе тивĕçнисенчен пĕри – Кĕçĕн Турханти Ирина Васильева активист. Вăл хистенипех кĕçĕн турхансем парка йĕркелес ĕçе хастар хутшăннă. «3 кун ĕçлерĕмĕр паркра. Малтанхи кун 10 çын антăмăр, кайран 7 пулнăччĕ. Пысăк чулсене катса фонтан йĕркелерĕмĕр, 2-3 КамАЗ тăпра килсе тăкрĕç, чечексене акма тăпрана урапасемпе туртса сапаларăмăр», – каласа парать Зинаида Родионова. «Мĕн тума каян ара, çумна çумлаха», – килтисем çапла калани те чарман ăна. «Ман çума никам та çумласа каймасть», – тесе хайхи халăхпа пĕрле парка хăтлăлатма васканă. Хăйсен ĕçне курса савăнма килнĕ уява кĕçĕн турхансем. Уявра Тав хучĕ кашнине тивĕçмерĕ, анчах ял тăрăх пуçлăхĕ кашни çынна чун-чĕререн тав туни пĕлтерĕшлĕ.

Халăх вырăнти тата эстрада артисчĕсен пултарулăхĕпе савăнма тытăннăччĕ, парка тинтерех ЗАГС-ра мăшăрланнине çирĕплетекен документа алла илнĕ Екатеринăпа Валерий Ефимовсем килсе çитрĕç. Шăпах вĕсем Юратакансен аллейине уçма тивĕçрĕç те.

■ АННА ФИЛИППОВА

# Никам та ĕçрен пăрăнман

• АСТĂВĂМ

*«Юрласах паян ĕçлерĕм,*
*Эп колхозăн хирĕнче...»*
– çакăн пек юрлатчĕç уйхирте ушкăнпа ĕçленĕ вăхăтсенче. Ун чухне çынсем «колхоз ятне сая ярас мар» тесе тăрăшнă.

шăран куçса килнĕ. Наполеон çарне парăнтарнă хыççăн Польшăн пĕр пайĕ Раççей тытăмне кĕнĕ. Чăваш облаçĕнчи ĕç тăвакан комитетра финанс тата социаллă ыйтусемпе ĕçленĕ Иван Алексеевич çак çемьерен пулнă. Вера Васильевна кĕçĕн класс ачисене вĕрентетчĕ. Уçă кăмăллă, ырă чунлă пулнă вăл. Анна Алексеевнăпа вара вĕсем пурăна киле тăхлачсем пулса тăчĕç.



Алă вĕççĕн тумалли ĕç нихăçан та пĕтмест вăл, тытса тумасан çаплипех выртать. Çулла, хĕрÿ ĕç пуçлансан, бригадăра ĕçлекенсене ялти служащисем пулăшатчĕç. Вĕсене те уй-хирте тÿпе уйăрса панă. 1956 çулта тунă сăн ÿкерчĕкре А.А. Леонтьева бухгалтер тата В.В. Тютина вĕрентекен сăнланнă.

Анна Алексеевна (малта, сулахайран пĕрремĕш) Вăрманкасси хĕрĕ пулнă – Шляхинсен çемйинчен. Унăн тăванĕсене, вĕреннĕ те чаплă çынсене, районĕпех пĕлетчĕç. Анна та Дон çинчи Ростов хулинче бухгалтерсен шкулĕнче вĕренсе тухнă, кайрантарах «За коммунизм» колхоз правленийĕнче счетоводра, бухгалтерта ĕçленĕ. Мăшăрĕ Герман Леонтьев вăрçă суранĕсене пула вăхăтсăр çĕре кĕнĕ. Икĕ ачине пĕчченех пăхнă Анна Алексеевна. Питĕ тирпейлĕ, сăпайлă хĕрарăмччĕ.

Вера Васильевна (сылтăм енче, Мефодий Трофимов бригадирпа юнашар) Етĕрне районĕнчи Саръялтан. Вăл педучилище пĕтернĕ, Чантăрти шкулта пĕрле ĕçленĕ Алексей Тютинпа пĕрлешсе Çĕньял-Покровскине пурăнма куçса килнĕ. Вĕсен 5 ачинчен виççĕшĕ ялти пурнăçах суйласа илнĕ.

Вера Васильевнăн хĕр чухнехи хушамачĕ хăйне евĕрлĕ – Крынецкая. Крынецкисем Етĕрнене Поль-

Сăн ÿкерчĕкре сăнланнă çынсем кантăр уйне пуса татма тухнă. Вĕсемпе пĕрле 9 класс пĕтернĕ Рита Овчинникова (халĕ Тимкина – Лапсарта пурăнать). Унпа юнашар Çĕньял-Покровскине качча килнĕ Екатерина Яруткина, Александра Леонтьева, унăн вăрçăра пуçне хунă пиччĕшĕн, Кĕркурин, мăшăрĕ Федора Ефремова. Бригадирăн амăшĕпе аппăшĕ Юля та сăнланнă кунта. Вĕсен хушшинче тăраканни – Никифор Ефимов арăмĕ пулас. Юля çумĕнче Павел Григорьев арăмĕ (Амур Павăлĕ тетчĕç). Сылтăмра Дарья (Таисия) Суркова савăнăçлăн тăрать. Илле арăмĕ тесен ăна пурте пĕлетчĕç. Малтан вăл маттур та хастарччĕ, тури урамран утса мар, чупса анатчĕ. Çулсем иртсен «мĕн тăвас тетĕн, нимĕн те тăваймастăн» теме пуçларĕ.

Сăн çаптараканĕ (Припалов фотокорреспондент пулнă теççĕ) уя тухма ÿркенмен, асăнмалăх сăн ÿкерчĕк хăварнă. Пур çын та пурăннă чух та, кайран та, хисепе тивĕç. Эпир вĕсене манмастпăр.

**ТАМАРА ВЕРЕНДЕЕВА,**
**ÇĔНЬЯЛ-ПОКРОВСКИ**

# ТУРКЕСТАНРИ ТУСЛĂХ ПАЛĂКĔ

• ÇУЛ ÇŸРЕВ

*(Вĕçĕ. Пуçламăшĕ иртнĕ номерте.)*

Каçхине авалхи йăлапа акин парнеленĕ сурăха пусса çумăр чÿкĕ ирттертĕмĕр. «Кунти хĕвел пирĕн енне кайтăр, çумăр кунта килтĕр», – терĕмĕр. Какай шÿрпине тепĕр кунне çирĕмĕр. Июлĕн 7-мĕшĕнче Ходжи Ахмет Ясави музейне çитсе куртăмăр. Ăна пĕтĕм тĕнчери ЮНЕСКО списокне кĕртнĕ. Мавзолея 1166 çулта çĕре кĕнĕ паллă поэтăн Ходжи Ахмет Ясавин вил тăпри çине хăпартса лартнă пулнă. XIX ĕмĕрччен кунта пухăнса казахсен ханĕсене влаçа ларма суйланă. Мавзолей çÿллĕшĕ 39 метр, тăршшĕ – 62,5 метр, сарлакăшĕ – 46,5 метр. Пĕтĕмпе 34 пÿлĕм. Кунта XIV-XV ĕмĕрсенчи ăстасен чаплă, илемлĕ япалисене курма пулать. Бронзăран ăсталанă пысăк хуран – тайказан куçа илĕртет. Ăна 1399 çулта ăсталанă. Тайказана 3 пин литр шыв кĕме пултарать. Кунтах Ходжи Ахмед Ясавин, унăн мăшăрĕн тата ывăлĕн вил тăприн плитисем. Кашни пÿлĕмре тенĕ пекех бронза япаласем пур. Хансемпе батырсене халалланă асăну хăми çинче 186 ят. Çĕр айĕнчи керменре те курса çÿремелли нумай пулчĕ. 1878 çулта хăпартнă мечеть картишĕнче çав вăхăтри тупăсем, арпа урапи, çăл кăсăклантарать.

Туркестан музейĕнче паллă палăксене, çар тумĕсемпе хĕç-пăшалсене, çар тумлă кĕлеткесене курма питĕ кăсăклăччĕ. Хула пасарĕнче парнесемпе сувенирсем туянтăмăр. Пире çула ăсатма Мехмет Куталмиш ректор килчĕ. Казахстанри туссенчен уйрăлма çăмăл пулмарĕ. Çул çинче çанталăк сулхăнлатрĕ, вĕтĕ çумăр çуса илчĕ, шăрăх та чакрĕ. Чăвашсем Казахсен çĕрĕ çинче çумăр чÿкне тĕрĕс ирттернине пĕлтеретех ĕнтĕ çак пулăм, пирĕн патри çумăр кунта çитнĕ. Июлĕн 8-мĕшĕнче, шăп та шай 5 кунтан малтан чикĕ урлă пĕр чăрмавсăр каçрăмăр. Çак çулçÿрев çĕнĕ çынсемпе тĕл пулнипе тата казах халăхĕн туслăхĕпе таравтлăхĕпе, шăрăх çанталăкпа асра юлĕ. Тепĕр виçĕ кунтан çумăрсем чарăнчĕç, хĕвеллĕ çанталăк пуçланчĕ. Олег Цыпленков каланă тăрăх, çитес чун çÿрев август уйăхĕнче иртĕ, эрнелĕхе тăсăлĕ. Унăн тĕп тĕллевĕ – Азов тинĕсĕ хĕррине çитсе Сенная песолок патĕнче вырнаçнă авалхи Ханакур хули пулнă вырăна пĕлтĕр лартнă палăк умне карта тытасси, тенкелсем лартса хăтлăх кĕртесси пулĕ.

**НИКОЛАЙ СМИРНОВ,**
**АТĂЛЪЯЛ**

• АСА ИЛŸ



# «Мăн учитель»

**Мăн Маркара нумай вăхăт 8 çул вĕренмелли шкул ĕçленĕ. Тăвата Маркаран унта чылай ача ăс пухса анлă çул çине тухнă.**

2006 çулта вара ăна хупса ачасене Ишекри вăтам шкула илсе çÿреме тытăнчĕç. Марка шкулĕнче вăй хунă учительсенчен пĕри Алексей Александрович Павловчĕ. Ăна вырăнти çынсем «Мăн учитель» тесе чĕнетчĕç. Çÿллĕ пулнăран пулĕ ĕнтĕ. Вăл вĕрентнĕ ачасем педагог яланах пысăк çăматăпа çÿренине аса илеççĕ. Кĕçĕн класенчи ачасене ăс панă Алексей Александрович. «Айтар» спектакльте аван выляннă.

Çак сăн ÿкерчĕке 1963 çулта кивĕ шкул умĕнче тунă. Тамара Пятковăпа Валерий Соколов пирĕн хушăра текех çук. Ыттисем çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесне саланнă. Римма Быкова Нижневартовск хулинче тĕпленнĕ. Çулĕ инçе пулсан та тăван яла кашни çулах килсе кайма тăрăшать. Зинаида Петрова Шупашкарта пурăнать. Галина Шаровăпа (Домнова) Римма Быкова (Александрова) Мăн Маркара пурăнаççĕ, Светлана Васильева, Евгений Михайлов, Леонид Полытов, Валерий Быков тата Григорий Александров – Шупашкарта. Любовь Исакова Красноярск крайĕнче, Тамара Андреева Красноярск крайĕнчи Лесосибирск хулинче вырнаçнă. Ефимова Евдокия вара Çĕнĕ Шупашкарта. Петр Николаев малтан тĕп хулара пурăннă, халĕ тивĕçлĕ канăва тухса Мăн Маркана куçнă. Владимир Филиппов – Ульяновск облаçĕнче.

**ЕКАТЕРИНА ГРИГОРЬЕВА,** МĂН МАРКА

• ШКУЛ САККИ

# 30 çултан – тĕл пулу

**Вăхăт хăвăрт иртет. 30 çул каялла Апаш шкулĕнчен вĕренсе тухнă тантăшсем июлĕн 22-мĕшĕнче пĕрле пуçтарăнчĕç. Кÿкеçре пурăнакан тава тивĕçлĕ вĕрентекен Леонид Васильевич Свинцов класс ертÿçи пулнă. Пуçламăш классенче вĕрентнĕ Роза Андреевна Евдокимова, шкул директорĕ Юрий Витальевич Смородинов та мероприятие хутшăнчĕç.**

Пĕр класра ăс пухнисем хăйсен пурнăç çулĕсем çинчен каласа кăтартрĕç. Шкул саккинчен уйрăлнă çамрăксем пĕтĕм çĕршывĕпех саланнă. Каччисем пурте çар тивĕçне чыслăн пурнăçланă. Николай Крылов çартан «За отличие службы государственной границы» медальпе таврăннă. Çавăнтанпах Ленин ячĕллĕ СХПК-колхозра водительте тăрăшать. Раиса Смирнова (Егорова) Елчĕк районĕнчи колхозра малтан ĕне, пăру пăхнă, юлашки 13 çул лавккара сутуçăра тимлет. Ирина Свинцова (Андреева) та сутуçă. Татьяна Иванова яланах поварта тăрăшнă. Валентина Викторова (Чернова) 27 çул ĕнтĕ Шупашкарти элеваторта весовщик ĕçĕнче. Валентина Васильева (Голованова) – Апашри ФАП заведующийĕ. Марина Алексеева (Голованова) – шкулти библиотекарь. Владимир Геннадьев райпора тата Пенси фондĕнче водительте вăй хурать. Сергей Федоров Апашри кирпĕч заводĕнче, геологсен компанийĕнче, Пенси фондĕнче водительте тимленĕ. Лия Осипова – тĕп хулари шкул вĕрентекенĕ. Пурте тĕрлĕ ĕçре вăй хураççĕ.

Тĕл пулу пурин кăмăлне те çĕклерĕ, нумайлăха асра юлчĕ.

**РОЗА ЕВДОКИМОВА**

• ШУПАШКАР РАЙОННЕ – 90 ÇУЛ



**Куйбышев ячĕллĕ колхозăн И. Иванов комбайнерĕ вырмара. 1976 ç.**

• ПИРЕ САЛАМЛАÇÇĔ

## «Тăван Ен» хаçатăн ырми ĕçченĕсене!

85 çул халăхпа пĕрле

Тăван Ен – хастар хаçатăм,
Илĕртен Чăвашлăхпа.
Икĕ чĕлхепе тухатăн, –
Сумлă эс Тăванлăхпа.

Пурнăçпа эс тан утатăн,
Çăлкуç пек тапать ырри.
Синкере пăрса яратăн, –
Чăн аван-çке эс пурри!

Сăн ÿкерчĕкри аваллăх,
Мерчен тумлă хĕрĕсем,
Патвар арĕ асăнмалăх,–
«Тăван Ен» илемĕсем.

Кашнинех тивĕçтеретĕн,
Шкул ачи е пĕчĕкки.
Эс пурне те вĕçтеретĕн
Ĕмĕтпе аван иккен.

Чун апачĕ те виçеллĕ,
Чĕрене тĕреклетет.
Пурте вырăнлă та меллĕ,
Çулсерен ÿсет тивлет.

Ĕçчен, сапăр – тĕп сăнарлăх
Витерет вулакана.
Ÿкерчĕкĕ те пахалăх, –
Чунри сăвă-калава.

Тĕнче анлăшне те çитнĕ,
«Тăван Ен», Сан хыпару.
Санпа вăй пухса çĕклентĕр
Туслăхра хастар ăру.

Ырлăх-сывлах,
телей пултăр,
Ырми пултарулăхра.
Сар хĕвелĕ хăват патăр,
Çĕнĕ вăйпа тăрăшма.

**ГАЛИНА МАКАРОВА,**
**ШУПАШКАР**

• ДЕНЬ ЗА ДНЕМ

## Прибыль или здоровье?

**В ГУП «Фармация» Минздрава Чувашии поступила жалоба от жительницы г. Алатырь о том, что в аптеке № 119 реализуется противоэпилептический препарат, отпуск которого разрешен только по рецепту врача.**

Эта тема поднималась на еженедельном совещании с Главой республики Михаилом Игнатьевым. Министр здравоохранения ЧР Владимир Викторов сообщил, что за первое полугодие 2017 года в вышеуказанную аптеку было поставлено 240 упаковок данного препарата. В то же время во все аптеки ГУП «Фармация», расположенные на территории республики, – 11 упаковок, из которых реализовано 4.

Владимир Викторов отметил, что в настоящее время принято решение временно приостановить отпуск препаратов с действующим веществом Габапентин и отозвать все товарные остатки из этой аптеки. Глава Чувашии потребовал провести служебное расследование и в течение двух недель отчитаться о принятых мерах.

• ДЕЛА МЕСТНЫЕ

**1 августа 2017 года сотрудники ОМВД России по Чебоксарскому району посетили Учебный центр «НИВА» п. Кугеси, где выступили перед сотрудниками учебного центра о возможности получения государственных услуг по линии МВД в электронном виде.**

Они рассказали присутствующим об удобстве, простоте и выгоде получения госуслуг. «Получение государственных услуг через Единый портал значительно сокращает время оказания услуги. При этом граждане имеют возможность подать заявление через Интернет или мобильное приложение в любое время суток в независимости от их местонахождения. Оплата госпошлины за предоставление госуслуги через Единый портал осуществляется с 30% скидкой. Это очень удобно, просто и выгодно», – подчеркнули сотрудники правоохранительных органов.

Коллективу и слушателям учебного центра раздали буклеты и информационные материалы, а также разъяснили пошаговый алгоритм действий для регистрации на Едином портале государственных услуг.

**В Чебоксарском районе из 4 существующих отделений временного проживания для граждан пожилого возраста лишь одно, в д. Курмыши, соответствует безопасным условиям проживания.**

В рамках программы «Повышение эффективности и качества услуг в сфере социального обслуживания населения в Чувашской Республике (2013-2018 годы)» предусматривается перевод остальных трех отделений в деревнях Шоркино, Яныши и Хыркасы в 2017-2018 годах из зданий 5 степени огнестойкости (деревянных) в здания не выше 3 степени огнестойкости. В Чебоксарском районе данным требованиям удовлетворяет Кугесьский дом-интернат для престарелых и инвалидов. Также признаны небезопасными в противопожарном отношении отделения временного проживания в Алатырском и Аликовском районах.

СПРАВОЧНО

**В 4 отделениях временного проживания района проживает 61 человек.**

# Мечтали попасть в «войска дяди Васи»



Фото Е. Дадюковой

КСТАТИ

**В ходе весеннего призыва три молодых человека отправились в Омский учебный центр ВДВ.**

• ДАТА

**2 августа 1930 года на учениях Московского военного округа под Воронежем впервые выпрыгнули на парашютах десантное подразделение в количестве 12 человек.**

С тех пор прошло 87 лет, но по сей день при любых обстоятельствах неизменно остается сила, мужество и надежность людей, живущих по принципу: «Никто кроме нас!». «Мы служили в войсках дяди Васи», – говорят сами десантники, и в этой фразе заключена готовность в любое время дня и ночи выполнить приказ, особая гордость за службу именно в этих войсках, и уважение к человеку-легенде, десантнику №1 Командующему Воздушно-десантными войсками генералу армии Василию Маргелову.

В этот день «голубые береты» Чебоксарского района с самого утра собрались у Памятника Неизвестному солдату для возложения цветов. Их было всего человек 15-17, но от них исходила мощная энергетика мужества, отваги и надежности, ведь за их плечами осталась суровая школа десантной службы.

Николай Алексеев служил в ВДВ 17 лет назад. «Для меня это очень значимый праздник, я его жду с нетерпением, чтобы встретиться с сослуживцами, вспомнить годы службы. Кстати, служил я три года, был и контрактником, – делится десантник. – Мечтал служить именно в этих войсках с 6-летнего возраста. Помню, как увидел соседа, вернувшегося из армии в красивой форме, в тот день я и поставил себе установку стать десантником». По его словам, те, кто был когда-то застенчивым, имел какие-то страхи, после службы в «крылатых войсках» становится смелее, уверенней в себе, с достоинством может постоять за себя и близких.

Житель поселка Кугеси 20-летний Никита Никифоров вернулся из армии 30 июня этого года, и в первый свой праздник он без раздумий присоединился к бывалым «голубым беретам». «Совершенно случайно попал в эти войска, не думал-не загадывал. Видимо, прошел по категории здоровья. Очень горд тем, что отслужил именно там, теперь мне будет проще найти работу в органах внутренних дел, ОМОН. На данный момент планирую поступить в вуз», – рассказал молодой человек.

Константин Егоров учился в поселке до 7-го класса, теперь здесь не живет, но в такой знаменательный день решил посетить родные места. На его груди блестят различные награды. Мы поинтересовались, что значит каждый из них. На одном выгравирована цифра «10», это значит, что молодой человек выполнил 10 прыжков с парашютом. Медаль «За участие в военном параде в День победы» Константину вручена в 2015 году. Также во время службы ему присвоен нагрудный знак «Специалист 3 класса наземной артиллерии».

Военный комиссар по Чебоксарскому и Мариинско-Посадскому районам Александр Кочуров считает, что сотни юношей хотят служить в этих войсках, но жесточайший отбор, включающий наличие спортивного разряда, сильные волевые качества, позволяют воплотить мечту о голубом берете в реальность лишь 5-7 юношам в год.

ЕЛЕНА ДАДЮКОВА

# ЕГИССО повысит прозрачность

• АКТУАЛЬНО

**С января 2018 года в России заработает Единая государственная информационная система социального обеспечения (ЕГИССО), оператором которого назначен Пенсионный фонд Российской Федерации.**

Об этом сообщила на еженедельной планерке в администрации Чебоксарского района начальник Управления Пенсионного фонда РФ в Чебоксарском районе Чувашской Республики Алевтина Исаева. По ее словам, ЕГИССО – это информационная система, позволяющая получать гражданам и органам власти актуальную информацию о мерах социальной поддержки, оказываемых из бюджетов всех уровней, как в отношении отдельно взятого человека, так и в целом по стране. А также получать сведения, необходимые органам власти для предоставления мер социальной поддержки. На данный момент, чтобы получить такие сведения, необходимо «перерыть» большое количество баз данных и различных регистров.

Внедрение данной системы позволит повысить эффективность государственного управления в области социальной помощи, повысить уровень информированности граждан о правах на социальное обеспечение и снизить их физические и временные затраты при получении тех или иных мер социальной поддержки.

«Также одной из задач, поставленных перед системой, является обеспечение возможности применения принципов адресности и критериев нуждаемости при предоставлении мер социальной поддержки», – отметила Алевтина Михайловна.

Кроме того, данная система позволит проводить аналитику по интересующим показателям в этой сфере и прогнозировать расходы бюджетов в части выполнения социальных обязательств государства. А также позволит повысить прозрачность системы социального обслуживания. ЕГИССО поможет властям определить, какие меры социальной поддержки реализуются на территории страны, и какие категории населения подпадают под их действие. Также даст возможность учитывать весь комплекс социальных льгот по всем категориям граждан, получающих государственную социальную поддержку из бюджетов всех уровней.

Важно то, что с внедрением этой информационной системы у каждого жителя Чувашской Республики будет возможность видеть все меры социальной поддержки, которые он получает, и даже те, которые ему положены, но пока не назначены. Человек получит всю информацию о своих правах на социальные выплаты, а власти всех уровней – информацию о них в электронном виде.

По информации Пенсионного фонда России, система устроена таким образом, что ведомства взаимодействуют между собой в электронном виде. Информация вводится однократно, но используется многократно и всеми, имеющими доступ к ней. Главными задачами использования системы являются повышение качества планирования затрат, разгрузка органов исполнительной власти от непрофильной деятельности и избыточных функций, исключение дублирования данных, повышение эффективности расходования бюджетных средств.

По словам Алевтины Михайловны, каждый гражданин России сможет открыть на портале собственный личный кабинет. Также там будут располагаться кабинеты поставщиков и потребителей информации, где органы государственной власти и организации, предоставляющие меры соцзащиты, смогут внести дополнительные данные о своих участках работы и получить сведения о необходимости и возможности оказания адресной социальной поддержки.

«На данный момент нам нужно изучить классификатор мер социальной поддержки и создать базу данных получателей. В сжатые сроки нам необходимо провести эту работу», – подчеркнула Алевтина Исаева.

В продолжение планерки начальник финансового отдела Мария Сергеева сообщила, что в Чебоксарском районе действует 71 поставщик информации в области государственной социальной помощи по 28 услугам, которые включаются в перечень социальной поддержки. «К примеру, обеспечение жильем детей-сирот и детей, оставшихся без попечения родителей, – это мера социальной поддержки, которая оказывается муниципалитетом. Она финансируется за счет федерального, республиканского бюджетов, но в итоге поставщиком является администрация Чебоксарского района», – отметила Мария Ивановна.

ЕЛЕНА ДМИТРИЕВА

• О ЧЕМ ГОВОРЯТ

## Семья важна для всех

**В Чебоксарской районной больнице в 2016 году находились два ребенка, изъятые из социально неблагополучных семей в связи с наличием угрозы их жизни и здоровью, в 2017 году – 3 ребенка.**

В среднем каждый ребенок находился в условиях стационара – 9 дней. Об этом сообщили и.о. главного врача медицинского учреждения Елена Петрова. Вопрос длительного нахождения в стационарах детей из неблагополучных семей обсуждался 31 июля на еженедельном совещании под руководством Главы Чувашии Михаила Игнатьева.

Уполномоченный по правам ребенка в Чувашии Елена Сапаркина пояснила, что в дом ребенка или детский дом их не переводят, так как не решается вопрос об их социальном статусе и причина опять же в родителях, которые или отказываются забрать ребенка из больницы, или вообще невозможно установить их местонахождения. Так, в Городскую детскую больницу № 3 г. Чебоксары в 2016 году был помещен 41 ребенок в возрасте до 3-х лет, изъятый из социально неблагополучных семей. Максимальный срок их пребывания в больнице составил 84 дня. За первое полугодие 2017 года в стационар помещены 34 ребенка из социально неблагополучных семей, максимальный срок их пребывания в больнице – 93 дня.

**вĕреннĕ:** Канашри педагогика училищинче, И.Я. Яковлев ячĕллĕ Чăваш патшалăх педагогика институчĕн музыкăпа педагогика факультетĕнче, Горький хулинчи М.И. Глинка ячĕллĕ патшалăх консерваторийĕн дирижерпа хор факультетĕнче

**ят-сум:** Чăваш АССРĕн тава тивĕçлĕ искусство ĕçченĕ, РФ тава тивĕçлĕ искусство ĕçченĕ, Чăваш Республикин патшалăх премийĕн литература тата искусство облаçĕнчи лауреачĕ. Туслăх орденĕн, «Чăваш Республики умĕнчи тивĕççемшĕн» орден медалĕн кавалерĕ. Шупашкар хулин сумлă çынни.

▶ Нумай пулмасть Ишлейре пурăнакан 46-ри çыннăн банк картти çинчен преступниксем 23 пин тенкĕ сăптăрса кайнă. Кăçалхи çур çулта Шупашкар районĕнче çакăн пек майпа тунă виçĕ преступление тупса палăртнă.

# Хăв улталанмасан çын улталаймасть

• АСĂРХАНĂР!

## Чăнлăх ума тухиччен ултав куçа шăтарĕ

**Сотовăй çыхăну, гаджетсем, Интернет тата самана варкăшĕн ытти тивлетлĕхĕ пурнăçа çирĕп кĕрсе вырнаçрĕç. Çĕнĕ технологисем кирек мĕнле информацие те çăмăллăнах тупма май параççĕ, преступниксем те çакăнпа усă кураççĕ. «Телефон урлă çын пурлăхне вăрласси анлă сарăлнă преступленисенчен пĕри пулса тăрать», – тет РФ ШĔМĕн Шупашкар районĕнчи уйрăмĕн пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлаканĕ Евгений Петров. Çакăнпа пĕрлех телефон урлă улталакансене тупса палăртма та йывăр, преступниксем урăх хулари е çĕршыври çынна та шăнман пăр çине лартса яма пултараççĕ-çке.**

### Темиçе çеккунт çителĕклĕ

Чăваш Республикинче кăçалхи çур çулта Интернета, мобиллĕ çыхăнăва усă курса, çавăн пекех банк карттисен счечĕсенчен укçа-тенке куçарса илсе тунă 553 преступлени пулнă, вĕсенчен 12-шĕ – Шупашкар районĕнче. Телефон ултавçисем ытларах тĕп хуламăрта – 359 преступлени – çынсене шар кăтартнă. «Анчах та çакă Шупашкар районĕнче 12 çын кăна телефон ултавçисен вăлтине лекнине пĕлтер-

«Халĕ сирĕн телефон çине код çитет, эсир ăна пире калăр, эпир вара карттăна усă курмалла тăватпăр», – теççĕ вĕсем. Çак хушăра ултавçăсем Перекет банкĕн Интернетри сервисĕ урлă шар кăтартма хатĕрленекен çыннăн «харпăр кабинетне» кĕреççĕ. Пароле никама та кăтартма юраманни пирки СМСра пысăк сас паллисемпех çыраççĕ, анчах çакна никам та шута илмест. Преступниксене вара шăпах вăл кирлĕ те. Карта çинчен пĕтĕм укçа-тенке куçарса илме темиçе çеккунт та çитемест», – уçăмлатать Евгений Владимирович. – Ултавçăсене пула укçа-тенкĕсĕр юлнă çын преступлени çинчен ăçта пĕлтерет, заявление çавăнта пăхса тухаççĕ те».

«Сирĕн карттăна блокировка лартнă, ăна ĕçлеттерсе яма çак номерпе шăнкăравлăр», – çакăн йышши СМС-çырăва илекенсем кунсерен пин-пин. Çĕр çынтан пĕри те пулсан хирĕç шăнкăравлатех. «Эпир Перекет банкĕн хăрушсăрлăх службин ĕçченĕсем. Ултавçăсем сирĕн карта счечĕ çинчи укçана вăрласшăн пулнă, çавăнпа унпа усă курассине вăхăтлăха чарма тиврĕ», – çакăн пек шанăçа кĕреççĕ преступниксем. Карттăна «блокировкăран хăтарма» мĕн тумаллине ăнлантараççĕ. Счет çинче мĕн чухлĕ укçа-тенкĕ пулнине те ыйтса пĕлме пултараççĕ.




лĕклĕ. Çакăн пек ултав схеми пирки чылайăшĕ илтнĕ, анчах та преступниксен серепине лекекен çав-çавах çук мар. Кăçалхи çур çулта Шупашкар районĕнче çакăн пек майпа тунă виçĕ преступление тупса палăртнă. Акă нумай пулмасть Ишлейре пурăнакан 46-ри çыннăн банк карти çинчен преступниксем 23 пин тенкĕ сăптăрса кайнă. Шар курнăкер çакăн пек ултав çинчен унччен илтнĕ иккен, анчах ăна çав-çавах вăртăн кода пĕлтерме ӳкĕте кĕртнĕ.

### Йӳнĕ хак хыççăн

Тепĕр ултав мелĕ та анлă сарăлнă. Преступник Интернет-сайтра сутакан пĕр-пĕр тавара туянма хатĕрри пирки пĕлтерсе тавар хуçипе çыхăнать, укçа-тенке ăçта куçармаллине ыйтать. Тавар патне вара унăн тăванĕ килет имĕш. Ним пирки те тавçăрмасăр сутуçă банк картин реквизичĕсене пĕлтерет. «Темшĕн укçа куçмасть», – тет малалла ултавçă. Сутуçа телефон номерĕ çине код килмелли пирки систерет – укçана куçарма вăл кирлĕ-мĕн. Ăна пĕлтерме ыйтать. Тавар сутакан кода асăннă хыççăн ултавçă Интернет-сервис урлă сутуçăн пĕтĕм счетне курма тытăнать. Банк картти çинче укçа-тенкĕ çук пулсан арăмĕн е тата урăх тăванĕн банк реквизичĕсене те ыйтма пултарать. Малалла вара чи малтан асăннă меслет хута каять. Акă апрель уйăхĕнче Ишлей ял тăрăхĕнче 37-ри çын мотоблок сутни пирки пурте пĕлекен сайта хыпар вырнаçтарнă. Ултавçăсем тин çеç асăннă меслетпе усă курса унăн банк картти çинчен 39 пин тенкĕ вăрланă.

Тавар сутни çинчен пĕлтерĕве ултавçă хăй те вырнаçтарать. Хака ятарласа чакарать. Сăмахран, автомашинăна 300 пин тенкĕпе сутать. Çак техникăн чăн хакĕ вара чылай пысăкрах. Шанăça кĕме тем тĕрлĕ сăлтав та шухăшласа тупма пултарать. Хăй вăл, сăмахран, Чулхуран, транспорт хатĕрĕ патне те унта çитмелле пулать имĕш. «Эсир манăн автомашинăна чăннипех те туянасшăн-и? Кунта тата тепĕр туянакан тупăнчĕ» – тет тем хушăран ултавçă туянакана укçа-тенкĕн пĕр пайне маларах куçарма хистесе. Йӳнĕ хак пирки çеç шухăшлать çак самантра туянакан, хăйне ултални пирки тавçăрмасть те. Вара машинăсăр та, укçа-тенкĕсĕр тăрса юлать.

**МИЛЕНА СЕРГЕЕВА**

### УЛТАВÇĂСЕН СЕРЕПИНЕ ЛЕКЕС МАР ТЕСЕН МĔН ТУМАЛЛА-ХА?

**«Чи малтанах банк карттисен реквизичĕсене вăрттăнлăхра тытмалла», – тет Евгений Петров. Карта номерне кăна парсан ултавçăсем шăнман пăр çине лартса яраймĕç. Вируслă СМСа уçсан е Интернетра хăш-пĕр сайтсене кĕрсен телефона вирус лекме пултарать. Преступниксем çак вируса банксен интернетри сервисĕ урлă карта хуçин «харпăр кабинетне» кĕме усă кураççĕ. Телефон ултавçисем хăйсен усал ĕçĕсене пурнăçлама çĕнĕрен те çĕнĕ схемăсем шухăшласа кăлараççĕ. Вĕсенчен мĕнле хӳтĕленмелле-ха? Интернетра иккĕленӳллĕ страницăсене уçмалла мар, Перекет банкĕн интернетри приложенине телефон номерĕпе çыхăнтармалла мар.**

### ШУХĂШ



**Евгений ПЕТРОВ,**
РФ ШĔМĕн Шупашкар районĕнчи уйрăмĕн пуçлăхĕн тивĕçĕсене вăхăтлăх пурнăçлаканĕ:

– Çак преступленисене тĕпрен илсен тĕрмере ларакан çынсем тăваççĕ. Ытларах пайĕ Самар облаçĕнчен, Курскран та пур. Телефон номерĕсене те, банк карттисене те вĕсем ют çынсен ячĕпе регистрацилеççĕ. Преступленисене тума хайхисене хăш-пĕр чухне ирĕкри çынсем те, чылай чухне çакна ăнланмасăрах, пулăшаççĕ.

РФ ШĔМĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕнче çакăн евĕр преступленисене тăвакансене тупса палăртакан ятарлă пай та йĕркеленĕ. Кашни кун республикăра 5-6 çын ултавçăсенчен шар курать.

• ÇУЛ ÇИНЧЕ

**ИЮЛĔН 31-МĔШĔНЧЕ КӲКЕÇРИ СОВЕТСКАЯ УРАМРА,** почта уйрăмĕн умĕнче, иртнĕ «Çуран çӳрекен. Çуран каçмалли вырăн» рейд вăхăтĕнче ГИБДД Шупашкар районĕнчи уйрăмĕн инспекторĕсем 6 çынна çул урлă ятарласа уйăрман вырăнтан каçнăшăн тытса чарнă. 10-15 метртан инçе мар вырнаçнă «зебра» патне çитме ӳркеннĕшĕн вĕсен халĕ штраф тӳлеме тивĕ. Çул урлă çуран каçакана РФ КоАПĕн 12.29 статйипе (1-мĕш пай) е транспорт хатĕрĕн пассажирне çул-йĕр правилине пăснăшăн 500 тенкĕлĕх штраф çырса пама пултараççĕ – ăнлантарать РФ Çулйĕр хăрушсăрлăхĕн Шупашкар районĕнчи уйрăмĕн пуçлăхĕ Юрий Поляков. Рейд вăхăтĕнче пĕр водитель «зебрăпа» каçакан çынна ирттерсе яман. Унăн РФ КаАПĕн 12.18 статйипе килĕшӳллĕн 1,5 пин тенкĕ штраф тӳлеме тивĕ.

**Июлĕн 29-мĕшĕнче «Атăл» М7 автоçулăн 646-мĕш çухрăмĕнче (Карачура ялĕ çывăхĕнче) ирхи 10 сехетре 10-мĕш модельлĕ «Жигули» «васкавлă пулăшу» машинипе çапăннă.**

Водитель çул çӳреве йĕркелемен урам тăваткалĕнче тĕп çул çине тухнă чухне хирĕç çулпа оперативлă служба транспорчĕ пынине асăрхаман. Çутă тата сасă сигналĕсене те çутнă пулнă ĕнтĕ «васкавлă пулăшу» машини – водитель тормоз çине çав-çавах вăхăтра пусса ĕлкĕреймен. ГИБДД Шупашкар районĕнчи уйрăмĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, аварире никам та суранланман, анчах та çул-йĕр хăрушсăрлăхĕн инспекторĕсем водительсене васкавлă службăсен транспорт хатĕрĕсене яланах çул пама ыйтаççĕ. Сирена сассиллĕ «васкавлă пулăшушăн» çул çинчи кашни çеккунт шутра пулма пултарать.

## УСАЛ ХЫПАР

Июлĕн 31-мĕшĕнче Шупашкар районĕнчи шыравпа çăлав службине Шемшер ял тăрăхĕнчи пĕвере каччă путса вилни çинчен хыпар çитнĕ. 17-ри яш хăйĕн ашшĕпе тата юлташ хĕрачипе моторлă резина кимĕпе пĕвене ярăнма тухнă пулнă. Тахăш вăхăтра çамрăк кимĕрен шыва ӳкнĕ, путнă. Водолазсем унăн кĕлеткине августăн 2-мĕшĕнче кăнтăрла иртсен пĕве тĕпĕнче тупнă. Çак хăрушă инкек пирки РФ МЧСĕн Чăваш Республикинчи тĕп Управленийĕ тата РФ ШĔМĕн Шупашкар районĕнчи уйрăмĕ пĕлтерет. Оперативлă службăсем пурте çынсене пĕве çывăхĕнче, шыв çинче каннă чухне асăрханулăхпа тимлĕх пирки манма юраманни çинчен аса илтереççĕ. Инкек пулнă вырăнта полици сотрудникĕсем ĕнер те ĕçленĕ.

08-07. На основании постановления администрации Сарабакасинского сельского поселения Чебоксарского района от 01.08.2017 г. № 64 администрацией Сарабакасинского сельского поселения Чебоксарского района проводится открытый аукцион по продаже в собственность земельного участка, который состоится 04 сентября 2017 года в 10-00 часов в зале заседаний администрации Сарабакасинского сельского поселения Чебоксарского района по адресу: Чебоксарский район, д. Сятракасы, ул. Центральная, д. 10.

Организатором аукциона выступает администрации Сарабакасинского сельского поселения Чебоксарского района.

На аукцион выставлен следующий земельный участок:

| № лота | Месторасположение земельного участка | Разрешенное использование, кадастровый номер земельного участка | Площадь, кв.м. | Начальный размер стоимости земельного участка, руб. | Сумма задатка участника аукциона, руб. | Вид права |
|---|---|---|---|---|---|---|
| 1 | Чувашская Республика, Чебоксарский район, Сарабакасинское сельское поселение, д. Сятракасы, ул. Советская, д. 34 «б» (земли населенных пунктов) | для ведения личного подсобного хозяйства 21:21:220102:46 | 1000 | 230 000,00 | 46 000,00 | собственность |

Обременения и ограничения земельного участка: не имеется.

Организатор аукциона имеет право отказаться от проведения аукциона не позднее, чем за 15 дней до его проведения.

Дата начала приема заявок на участие в аукционе – 04 августа 2017 года, 08 часов 00 минут.

Дата окончания приема заявок на участие в аукционе – 01 сентября 2017 года, 17 часов 00 минут.

Заявитель обеспечивает поступление задатка на счет Администрации Сарабакасинского сельского поселения Чебоксарского района не позднее 01 сентября 2017 года.

Прием заявок, оформление документов для участия в аукционе, ознакомление с проектом договора купли-продажи земельного участка осуществляются в рабочие дни с 8 час. 00 мин. до 17 час. 00 мин. по московскому времени (кроме выходных и праздничных дней) в администрации Сарабакасинского сельского поселения Чебоксарского района по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, д. Сятракасы, ул. Центральная, д. 10. Телефон для справок (8-83540) 2-74-24.

Определение участников аукциона состоится 04 сентября 2017 года в администрации Сарабакасинского сельского поселения Чебоксарского района в 09-00 часов по московскому времени.

Регистрация участников аукциона – 04 сентября 2017 года с 9 час. 30 мин. по адресу: д. Сятракасы, ул. Центральная, д. 10.

Дата и время осмотра земельного участка осуществляется с участием специалистов администрации Сарабакасинского сельского поселения на основании письменного обращения Заявителя, если такое обращение поступит не позднее, чем за 10 (Десять) дней до даты окончания срока приема заявок.

Для участия в аукционе необходимо:

1) Подать заявку на участие в аукционе по установленной Организатором торгов форме с указанием реквизитов счета для возврата задатка. Заявки подаются и принимаются одновременно с полным комплектом требуемых для участия в аукционе документов;

2) Представить копии документов, удостоверяющих личность – для физических лиц (с одновременным предъявлением оригиналов этих документов);

Организатор аукциона в отношении заявителей – юридических лиц и индивидуальных предпринимателей – рекомендует предоставить: выписку из единого государственного реестра юридических лиц (для юридических лиц) или из единого государственного реестра индивидуальных предпринимателей (для индивидуальных предпринимателей), полученную не ранее, чем за 6 месяцев до дня подачи заявки; выписку из решения уполномоченного органа юридического лица об одобрении или о совершении крупной сделки (если это необходимо в соответствии с учредительными документами претендента и законодательством Российской Федерации).

3) Внести задаток и представить платежный документ с отметкой банка об исполнении, подтверждающий внесение соответствующих денежных средств. Задаток вносится единым платежом в валюте Российской Федерации на лицевой счет администрации Сарабакасинского сельского поселения Чебоксарского района по следующим реквизитам:

ИНН 2116815648, КПП 211601001, УФК по Чувашской Республики (Администрация Сарабакасинского сельского поселения Чебоксарского района Чувашской Республики)

Расчетный счет: 40302810397063000312 в Отделении- НБ Чувашская Республика, БИК 049706001 Лицевой счет: 05153002770, ОКТМО 97644452

Исполнение обязанностей по внесению суммы задатка третьими лицами не допускается. Внесение суммы задатка третьими лицами не является оплатой задатка.

Задаток возвращается участникам аукциона, за исключением победителя, в течение 3 (трех) банковских дней со дня подписания протокола об итогах аукциона. Задаток, внесенный победителем, засчитывается в счет стоимости земельного участка.

Победителем признается участник аукциона, предложивший наибольшую стоимость земельного участка. При равенстве предложений победителем аукциона признается тот участник, чья заявка была подана раньше.

Договор купли-продажи земельного участка подлежит заключению в срок не позднее 5 дней со дня подписания протокола о результатах аукциона. Победитель аукциона производит оплату стоимости земельного участка в течение 5 дней со дня подписания договора купли-продажи земельного участка.

В случае если аукцион признан несостоявшимся в связи с тем, что в аукционе участвовало менее 2 (двух) участников, Организатор аукциона в день проведения аукциона вручает или направляет единственному участнику аукциона (его полномочному представителю) предложение заключить договор купли-продажи, аренды по начальной цене и при его согласии подписывает с ним указанный договор в порядке, в срок и на условиях, установленных выше.

Имеются возможности подключения к сетям электроснабжения от существующей линии электропередач напряжением 0,4 кВ и к сетям водоснабжения от существующей водопроводной сети ф110 мм с устройством нового колодца с максимальной суточной нагрузкой 2 $м^3$.

Технические условия подключения к сетям газоснабжения получаются правообладателем земельного участка.

## СУТАТПĂР
### ПРОДАЕМ

**06-42. Продаю гравмассу, песок, щебень, бой кирпича и бетона, цемент М-400, М-500. Доставка. Тел.: 8-927-849-76-75.**

**07-24. Любой кирпич. Тел.: 8-927-667-83-78.**

06-45. Бычков. Телок, овец, ягнят романовской породы. Тел.: 8-987-126-30-07.

07-64. Пĕрре пăрулană ула ĕне. Тел.: 8-987-670-88-76.

07-70. 3 уйăхри хĕрлĕ-шурă тына пăру. Тел.: 8-906-388-73-83.

## ТУЯНАТПĂР
### КУПИМ

05-14. Куплю скотину. Дорого. Тел.: 8-961-344-03-82.

07-03. Корову, бычка, телку, овец. Тел.: 8-905-342-39-43.

05-38. КРС, свиней, лошадей. Тел.: 8-902-327-56-06.

## КИЛ-ÇУРТ
### НЕДВИЖИМОСТЬ

07-35. Продаю земельный участок площадью 12 соток в коттеджном поселке в селе Чурачики Цивильского района по договорной цене. Все коммуникации и асфальт – до участка. Тел. 8-952-310-31-91.

## ТĔРЛĔРЕН
### РАЗНОЕ

07-67. Утерянный аттестат А № 378037, об окончании среднего полного образования на имя Кисуниной Татьяны Вячеславовны, считать недействительным.

## ĔÇ
### РАБОТА

**07-52. Требуется слесарь, электрик. Тел.: 8-906-380-57-81.**

## ПУЛĂШУ
### УСЛУГИ

**05-42. Натяжные потолки. Акции! Замер бесплатно! Тел.: 37-62-44.**

**06-57. Услуги мини-экскаватора, эвакуатора. Тел. 8-927-857-72-60.**

**06-43. Строительство домов и бань под ключ. Кровельные и отделочные работы, обшивка фасадов. Кладка, фундаменты. Заборы. Срубы. Тел.: 8-927-667-03-55.**

07-71. Бурение скважин на воду. Гарантия. www. бур21.рф 21-34-74, 89373917358.

**Кольца колодцев ж/б**
D-0.7; 1.0; 1.5.
●Бурение колодцев и скважин.
●К/б блоки от производителя 20х20х40, 30х20х40, 12х20х40.
●Доставка.
**Т.: 8-902-327-82-52.**
02-11

СервисЦ
**РЕМОНТ ХОЛОДИЛЬНИКОВ ТЕЛЕВИЗОРОВ**
Тел.: 8-927-990-46-75
07-37

СервисЦ
**ТриколорТВ. ТЕЛЕКАРТА. УСЛУГИ. ОБМЕН**
Тел.: 8-927-990-46-75
07-38

**ОХРАННИКИ.**
Вахта 15/15, 30/15.
**Прямой работодатель.**
Проживание, лицензирование, авансирование.
**З/п от 40 000 р.**
**г. Москва, м. Братиславская, ул. Люблинская, д. 151.**
**8-495-150-52-98, 8-800-775-80-29 -**
бесплатный вызов.
08-03

**РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲ**



8(83540) **2-12-59**

**Коллегия юридической защиты**
**Юридическая помощь по возврату водительских удостоверений. ДТП. Возврат по амнистии уже лишенных прав. Официально.**
**Тел.: 8-800-35-01-002. Звонок бесплатный!**
05-04

**07-42.** АО «Чувашхлебопродукт» на постоянной основе закупает пшеницу и рожь продовольственную. Оплата своевременная. Телефон отдела закупок: **8 (8352) 66-21-51, 63-42-63, 8 937 954-30-43.**

**ПРОДАЮ УСПЕШНЫЙ БИЗНЕС ПО РЕАЛИЗАЦИИ МЯСА, ШАШЛЫКА, КОЛБАСЫ, СЫРЫ И ДР. ТД «ДОРОЖНИК», п. Кугеси, ул. Шоссейная, 17 А.**
**Тел.: 8-903-063-93-86.**
07-69

СКИДКИ ДО 50%
**Пластиковые окна от оконного завода**
**Летние суперскидки.**
От 2800 руб.
ЗА ДЕРЕВЕНСКОЕ ОКНО.
**Утепленные в 3 стекла.**
**Вызов замерщика бесплатно.**
**8-927-668-69-55.**
06-63



**ПАМЯТНИКИ от 2000 рублей**
**АО «Базальт»** г. Чебоксары, ул. Гладкова, д. 7.
предлагает **ПАМЯТНИКИ, КРЕСТЫ ИЗ МРАМОРНОЙ КРОШКИ, ЧЕРНОГО ГРАНИТА, СЕРОГО И БЕЛОГО МРАМОРА.**
● Столики, скамейки, ограды, венки.
● СКИДКИ, РАССРОЧКА ПЛАТЕЖА. ГАРАНТИЯ.
**ДОСТАВКА И УСТАНОВКА. БЕСПЛАТНОЕ ХРАНЕНИЕ.**
☎8 (8352) 56-29-68.
01-73

РАБОТА НА ОБЪЕКТАХ РОССИИ!!! **ТРЕБУЮТСЯ:**
- СБОРЩИКИ (от 37 т.р.)
- АРМАТУРЩИКИ (от 37 т.р.)
- РАЗНОРАБОЧИЕ (от 35 т.р.)
- СВАРЩИКИ (от 40 т.р.)
■Официальное трудоустройство
■Авансы на питание ■Проживание
8-912-460-33-99
07-06

**1 кв.см. МОДУЛЬНОЙ РЕКЛАМЫ от 26 рублей**

**ООО «ТМ»**
**ПРОИЗВОДИМ И ДОСТАВЛЯЕМ БЫСТРО, КАЧЕСТВЕННО, С ГАРАНТИЕЙ**
**ПРОФНАСТИЛ**
**ДЛЯ КРЫШ И ЗАБОРОВ оцинкованный и с полимерным покрытием разных цветов**
**МЕТАЛЛОЧЕРЕПИЦА «МОНТЕРРЕЙ»**
**Производство** на новом современном оборудовании
**Изготовление** по размерам Заказчика, а также:
■ доборные элементы на заказ; ■ трубы профильные
■ крепеж в ассортименте; ■ евроштакетник для забора цветной металлический
ЗАЯВКИ ПО ЗВОНКУ. ОПЛАТА ПРИ ДОСТАВКЕ.
**89524659723; 89290427904; тел/факс: 8(83174) 2-86-05.**
ДОСТАВКА 1000 рублей
ЭЛ. ПОЧТА: ooo-tm1@mail.ru, САЙТ: profil-tm.ru
07-60



## ÇĔР
### ЗЕМЕЛЬНЫЕ ОТНОШЕНИЯ

07-61. ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА

Настоящим, кадастровый инженер Ященко И. Ю., номер квалификационного аттестата 21-13-23, адрес: ЧР, г. Чебоксары, Президентский бульвар, д. 31, e-mail: inzhener21@ya.ru, тел.:8(8352) 20-44-77, извещает участников долевой собственности СХПК им. Ленина о подготовке проекта межевания земельного участка, выделяемого в счет земельной доли в Абашевском сельском поселении Чебоксарского района Чувашской Республики.

Заказчиком работ по подготовке проектов межевания земельных участков является Александров В. Н., адрес: Чувашская Республика, Чебоксарский район, д. Байсубаково, ул. Полевая, д. 30.

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:21:000000:49, адрес: Чувашская Республика, Чебоксарский район, Абашевское с/пос.

С проектом межевания земельного участка можно ознакомиться по адресу: г.Чебоксары, Президентский бульвар, д. 31, офис 303, с 9 часов 00 мин. по 16 часов 30 мин. в течении 30 дней со дня опубликования настоящего извещения. Для ознакомления с материалами проектов межевания заинтересованным лицам необходимо при себе иметь:

- документ, удостоверяющий личность;

- свидетельство о праве собственности на земельную долю или иной документ в соответствии со ст. 18 Федерального закона №101-ФЗ «Об обороте земель сельскохозяйственного назначения».

Обоснованные возражения относительно размера и местоположения границ выделяемого в счет земельной доли земельного участка после ознакомления с проектом межевания направляются или вручаются в письменной форме в течение 30 дней со дня опубликования настоящего извещения по двум адресам:

1) 428000, Чувашская Республика, г. Чебоксары, Президентский бульвар, д. 31, офис 303.

2) 428017, Чувашская Республика, г. Чебоксары, пр-кт Московский, д. 37, филиал ФГБУ «Федеральная кадастровая палата Федеральной службы государственной регистрации, кадастра и картографии» по Чувашской Республике-Чувашии.

07-62. ИЗВЕЩЕНИЕ О СОГЛАСОВАНИИ ПРОЕКТА МЕЖЕВАНИЯ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА

Настоящим, кадастровый инженер Ященко И. Ю., номер квалификационного аттестата 21-13-23, адрес: ЧР, г. Чебоксары, Президентский бульвар, д. 31, e-mail: inzhener21@ya.ru, тел.:8(8352) 20-44-77, извещает участников долевой собственности о подготовке проекта межевания земельного участка, выделяемого в счет земельной доли в Абашевском сельском поселении Чебоксарского района Чувашской Республики.

Заказчиком работ по подготовке проектов межевания земельных участков является Алексеев В. К., адрес: Чувашская Республика, Чебоксарский район, д. Байсубаково, ул. Родниковая, д. 1.

Кадастровый номер исходного земельного участка 21:21:000000:559, адрес: Чувашская Республика, Чебоксарский район, Абашевское с/пос.

С проектом межевания земельного участка можно ознакомиться по адресу: г.Чебоксары, Президентский бульвар, д. 31, офис 303, с 9 часов 00 мин. по 16 часов 30 мин. в течении 30 дней со дня опубликования настоящего извещения. Для ознакомления с материалами проектов межевания заинтересованным лицам необходимо при себе иметь:

- документ, удостоверяющий личность;

- свидетельство о праве собственности на земельную долю или иной документ в соответствии со ст. 18 Федерального закона №101-ФЗ «Об обороте земель сельскохозяйственного назначения».

Обоснованные возражения относительно размера и местоположения границ выделяемого в счет земельной доли земельного участка после ознакомления с проектом межевания направляются или вручаются в письменной форме в течение 30 дней со дня опубликования настоящего извещения по двум адресам:

1) 428000, Чувашская Республика, г. Чебоксары, Президентский бульвар, д. 31, офис 303.

2) 428017, Чувашская Республика, г. Чебоксары, пр-кт Московский, д. 37, филиал ФГБУ «Федеральная кадастровая палата Федеральной службы государственной регистрации, кадастра и картографии» по Чувашской Республике-Чувашии.

07-65. ИЗВЕЩЕНИЕ О ПРОВЕДЕНИИ СОБРАНИЯ О СОГЛАСОВАНИИ МЕСТОПОЛОЖЕНИЯ ГРАНИЦЫ ЗЕМЕЛЬНОГО УЧАСТКА

Кадастровым инженером Пономаревой Тамарой Викторовной, квалификационный аттестат 21-11-11, адрес: ЧР, Чебоксарский район, п. Кугеси, ул. Шоссейная, д. 14«а». E-mail: ooo-zemlemer21@mail.ru, (83540)2-12-52, выполняются кадастровые работы в отношении земельного участка с кадастровым номером 21:21:060702:10, расположенного по адресу: ЧР, Чебоксарский район, д. Верхний Магазь, ул. Соловьевых, д. 32.

Заказчиком кадастровых работ является Борисова Лидия Михайловна, проживающая по адресу: Чувашская Республика, г. Новочебоксарск, ул. Речная, д. 4, кв. 39.

Собрание заинтересованных лиц по поводу согласования местоположения границы состоится в 10-00 ч. 04 сентября 2017 г. по адресу: ЧР, Чебоксарский район, п. Кугеси, ул. Шоссейная, д. 14 «а».

С проектом межевания земельного участка можно ознакомиться, а так же возражения по проекту межевого плана и требования о проведении согласования местоположения границ земельного участка на местности принимаются с 4 августа 2017 г. по 4 сентября 2017 г. по адресу: ЧР, Чебоксарский район, п. Кугеси, ул. Шоссейная, д. 14 «а».

Смежные земельные участки, с правообладателями которых требуется согласовать местоположение границы: 21:21:060702:11.

07-68. Кадастровым инженером Морозовой Е.А. адрес: ЧР, п. Кугеси, ул. Советская, д. 50, elenaaleks2505@mail.ru, тел. 8(83540)2-26-14, № регистрации в государственном реестре лиц, осуществляющих кадастровую деятельность - 9576, подготовлен проект межевания земельного участка образованного путем выдела из землепользования СХПП «Кооператив Сад», кадастровый номер 21:21:000000:32, местоположение: ЧР, Чебоксарский район, Большекатрасьское сельское поселение.

Заказчиком работ по подготовке проекта межевания земельного участка является: Соловьева Елизавета Ипатьевна, адрес: ЧР, Чебоксарский район, д. М.Янгильдино, ул. Новая, д. 30, тел:. 89276658614.

С проектом межевания земельного участка можно ознакомиться по адресу: ЧР, Чебоксарский район, п. Кугеси, ул. Советская, д. 50.

Обоснованные возражения относительно размера и местоположения границ, выделяемого в счет земельной доли земельного участка принимаются в течение 30 дней со дня опубликования данного извещения по адресу: ЧР, Чебоксарский район, п. Кугеси, ул. Советская, д. 50, а также в отдел кадастрового учета - ФГБУ «Федеральная кадастровая палата Федеральной службы государственной регистрации, кадастра и картографии» по Чувашской Республике-Чувашии, расположенного по адресу: ЧР, г. Чебоксары, Московский проспект, д. 37.

Рубрика
**«СОБОЛЕЗНОВАНИЕ»**
для юрлиц и ИП[1] – **600 РУБ,**
для частных лиц[2] – **400 РУБ.**

[1] Свыше 40 слов – дополнительно 25 руб, за каждое слово.
[2] Свыше 40 слов – дополнительно 18 руб, за каждое слово.

• ПРАВОПОРЯДОК

# Соблюдаются ли права граждан?

**В 1 полугодии 2017 года прокуратура Чувашской Республики провела анализ состояния законности в сфере соблюдения конституционных прав участников уголовного судопроизводства.**

По информации прокурора отдела прокуратуры республики Д.О. Максимова, следователями и дознавателями в этом периоде по результатам доследственных проверок принято 30 118 решений об отказе в возбуждении уголовного дела. Из них прокурорами отменено 8008 незаконных постановлений. Органами предварительного расследования возбуждено 6 056 уголовных дел, из которых отменено 22 постановления. По инициативе прокуроров выявлено и поставлено на учет 170 преступлений, из них 18 преступлений, относящихся к категории тяжких. Признано незаконными и отменены 58 постановлений органов предварительного расследования о прекращении уголовного дела.

Постоянно выявляются факты волокиты при расследовании уголовных дел, необоснованного затягивания предварительного следствия, а также продление сроков расследования. В этой связи 15 июня 2017 года в прокуратуре под председательством и.о. прокурора республики А.И. Григорьева состоялось заседание координационного совещания.

Аппаратом прокуратуры республики в целях координации деятельности прокуроров стал осуществляться еженедельный мониторинг состояния их работы в данной сфере, районы, в которых освобождаются лица из числа задержанных без обращения с ходатайством в суд об аресте, берутся на контроль.

За истекший период прокурорами рассмотрено 2292 обращения на решения и действия (бездействие) должностных лиц, осуществляющих расследование (удовлетворено 305).

Таван Ен

**Учредитель (соучредители):** Министерство информационной политики и массовых коммуникаций Чувашской Республики, Автономное учреждение Чувашской Республики «Редакция газеты «Тăван Ен» Министерства информационной политики и массовых коммуникаций Чувашской Республики

Газета зарегистрирована в Управлении Федеральной службы по надзору в сфере связи, информационных технологий и массовых коммуникаций по Чувашской Республике - Чувашии 05 октября 2012 г. **ПИ № ТУ 21-00231.**

**Газета распространяется в Чебоксарском районе, гг. Чебоксары и Новочебоксарск, а также в райцентрах Чувашской Республики**

Выходит по пятницам на чувашском языке, с подачей некоторых материалов на русском.

Гонорар выплачивается только за материалы, написанные по заказу редакции. Рукописи, фотографии, рисунки не возвращаются и не рецензируются. Опубликованные мнения не всегда совпадают с точкой зрения редакции. За достоверность материалов ответственность несут авторы. Редакция не вступает в переписку с читателями. За содержание рекламы ответственность несет рекламодатель.
При подготовке материалов использованы информация и фотографии с сайта администрации Чебоксарского района, официального портала органов власти Чувашии www.cap.ru, и сайта «Российской газеты».

Подписной индекс газеты **54820**

Адрес редакции и издателя: **АУ «Редакция газеты «Тăван Ен» Мининформполитики Чувашии 429500, Чебоксарский район, п. Кугеси, ул. Шоссейная, 13**
E-mail: **tavan-en21@yandex.ru** Сайт: **www.tavanen.ru**
Факс: 8(83540) **2-21-88, 8(8352) 20-10-85**

**Тел. для справок** – 8 (83540) **2-12-59**. | ***Отделы:*** новостей и общественной жизни – **8 (83540) 2-21-88,** | местного самоуправления, социальной политики и организационно-массовой работы **– 8 (83540) 2-21-88, 8 (8352) 20-10-71,** | рекламы и подписки **– 8 (83540) 2-12-59,** | бухгалтерия – **8 (8352) 20-10-85,** | гл. редактор – **8 (83540) 2-21-88, 8 (8352) 20-10-85.**

**Прием объявлений и рекламы, подписка** с 8.00 до 17.00
E-mail: **tavanen@mail.ru** **Тел.:** 8(83540) **2-12-59**

И.о. главного редактора **В.А. ВЫШИНСКАЯ**
Дежурный по номеру **А.В. ТИХОНОВА**

Материалы, обозначенные знаком Ⓟ, а также в рубриках «Саламлатпăр», «Тав тăватпăр», публикуются на платной основе.

**© Перепечатка или иное воспроизведение материалов без письменного разрешения редакции запрещена.**

Печать офсетная.
Объем 3,0 печ. л.
Время подписания в печать: по графику – 18.00, фактически – 17.30 03.08.2017 г.
Дата выхода в свет: 04.08.2017 г.
Тираж **2640 экз.**
Заказ № 2589
Номер отпечатан в ОАО «ИПК Чувашия» 428019, Чебоксары, пр. И. Яковлева, 13.
Цена свободная

Чи паха парне мĕн хак? ▶уйрăм çынсемшĕн «Тăван Енри» салам хакĕ 500 тенкĕ; ▶предприяти-организацисемшĕн, юридици сăпачĕсемшĕн 600 тенкĕ; ▶сăн ўкерчĕк 100 тенкĕ. Квитанципе ўнĕрех.

# Чечеклен, Кăшавăш ен!



• УЯВ

**Чăннипех тăван кĕтесе юратса, унăн ўсĕмĕсемпе савăнса пурăнаççĕ Кăшавăш енĕн хастар çыннисем. Авалтан, мăн асатте-асаннесенчен упранса юлнă йăла-йĕркене сума суса, çитĕнсе пыракан ăрăва чăвашăн «ылтăн çўпçине» упрама вĕрентсе, кăшавăшсем малалла пурнăç таппипе тан утаççĕ. Ĕçре маттур ял ĕçченĕн килĕ-çурчĕ капмар, анкартийĕ – пахча çимĕçпе, уй-хирĕ – тырпулпа пуян.**

Кăçал ял тăрăхĕ йĕркеленнĕренпе 90 çул çитрĕ. Вунă ял пĕрле пухăнса çулсерен уяв ирттересси тахçанах йăлана кĕнĕ ĕнтĕ. Уяв кунне ку тăрăхра пурăнакансем кăçал уйрăмах тăрăшса хатĕрленчĕç.

Палăртнă кун кăнтăрла тĕлне шкул стадионĕ ялсенчен килсе çитнĕ спортсменсемпе тулчĕ. Командăсем футболта, волейболта вăй виçрĕç. Уяв программине малалла пилĕк ялтан килнĕ çемьесем тăсрĕç. Ашшĕ-амăшĕпе пĕрле пĕрер ача ăмăртрĕ. Канат туртакан паттăрсене те ял-йыш пысăк хавхаланупа йышăнчĕ. Конкурссене пĕтĕмлетнĕ май çакă паллă пулчĕ – малти вырăнсене ытларах кил хуçисем – кăрмăшсем, çĕнсе илчĕç.




Чуна хумхантарса, хамăр чăваш иккенне тепĕр хут аса илтерсе, наци тумĕ тăхăннă аппасемпе пиччесем, яшсемпе хĕрсем, пĕчĕк шăпăрлансем илемлĕ кĕвĕ çеммипе акăш евĕр шуса вăйă карти йĕркелерĕç. «Аки-сухи» юрăпа уçрĕ пысăк та сумлă юбилее Кăшавăш енчи çĕр-çĕр çын. Уява пуçтарăннă çынсем ушкăнсене пайланса парадри евĕр утса иртрĕç. Çак парад умĕпе ял тăрăх гербне тата ялавне çĕклесе пыни мероприятие тата та сумлărах кăтартрĕ.

Ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Сергей Мульдияров ентешсене пысăк уявпа саламларĕ, вырăнти администрацире тĕрлĕ çулта вăй хунисене Тав хучĕсемпе тата парнесемпе палăртрĕ. Чăваш Республикин профсоюз комитетĕнче тимлекен, Кăшавăш ялĕнче пурăнакан М. Петров ентешсене саламланипе пĕрлех Сергей Ивановича РФ Строительство министерствин Тав хучĕпе чысларĕ. Çак уявра ял тăрăхĕнчи чи ватă çынна – Кĕçĕн Котякри Екатерина Степановăна, сумлă мăшăра – Ярăскассинчи Вениаминпа Зоя Дмитриевсене, нумай ачаллă çемьене – Кăрмăшри Сергейпе Светлана Фоминсене, çамрăк мăшăра – Вăрăмтури Александрпа Жанна Рябковсене, чи çамрăк гражданина – Кăшавăшри Сергейпа Надежда Лебедевсен пĕчĕк хĕрне парнеллĕ турĕç. Ялсенчи хастар ывăл-хĕр те çак кун Тав хучĕсене тивĕçрĕ.

Жюри членĕсене çĕнтерўçе палăртма нихçанхинчен те йывăртарах пулчĕ. Кашни ял тĕлĕнмелле куравсем йĕркеленĕ: ал ĕçĕсем, ўкерчĕксем, тĕрлесе тунă ял картти, сĕтел тулли ĕçме-çиме…Чăннипе каласан, курма тесе тухнă çын кăшт арпашса та илчĕ: те концерт пăхас, те кўршĕ ял хастарĕсем вĕретнĕ тутлă сăрапа вĕри кукăле ас тивес? Ял тăрăх администрацийĕн тĕп парнине – 100 пин тенкĕлĕх сертификата кăçал Кăрмăшра пурăнакансем çĕнсе илчĕç.

Уява пухăннисем культура ĕçченĕсем хатĕрленĕ «Ылтăн йывăçпа» та кăсăклансах паллашрĕç: ылтăн туй кĕрлесе иртнĕ хамăр тăрăхри çемьесен генеалоги тĕпчевĕ пуриншĕн те интереслĕ пулчĕ. Библиотека заведующийĕ Галина Иванован ял тăрăх историне, вырăнти пултаруллă çынсене халаллана куравĕ те уявра хăйĕнпе кăсăкланакансене тупрĕ. Концерт программине, ташă каçне «Асамат» эстрада ушкăнĕ çĕрлечченех малалла тăсрĕ.

**РЕГИНА ЧЕРНОВА, КĂРМĂШ**

# Сăр тăрăх сулăпа




**Вăрман-Çĕктер ял тăрăхĕнчи Станъялăн хастар арçынĕсем 4 кун хушшинче сулă ăсталанă, ăна «Станъял» ят панă.**

«Сулă ăсталас шухăша Çўлтикасси шкулĕн учителĕ Владимир Корейкин пачĕ. 30 çул каялла вăл ертсе пынипе 2 çул çўрев иртнĕ: 1-мĕшĕ «Çĕмĕрле-Пăрачкав» маршрутпа çуран, тепри Шупашкартан ракетăллă катерпа Васильсурска çити хăпарнă, унтан ушкăн çуран Етĕрнери çўлти кĕпер патне утса тухнă», – каласа пачĕ ушкăн ертўçи Александр Улеев.

Сăр тăрăх сулăпа анассине Тинĕс Çар флочĕн кунне тата Экологи Çулталăкне халаллама шут тытрĕç хастарсем. Сулă 4 метр сарлакăш, 6 м тăршшĕ, ăна шыва путасран карăнтарнă 12 камера тытса тăрать, 3 камера запасра. Сулă çине хăма сарнă урай, пысăк палата-ўпле вырнаçтарнă, çăлав жилечĕсем пур. «Тăкакĕ 35 пине кайса ларчĕ, командăпа пĕрле пуçтартăмăр», – пĕлтерчĕ Александр Улеев. Командăра 8 арçын. Чи асли 68 çулти Владимир Корейкин, кĕçĕнни Александр Улеевăн ывăлĕ 17-ри Александр. Çавăн пекех йышра: Вăрман-Çĕктер ял тăрăх пуçлăхĕ Олег Ерманов (Вăрманкасси), Станъялти Алексей Майоров, Кайри Ункăпуçĕнчи Вячеслав Савинов, Малти Ункăпуçĕнчи Александр Вастрейкин тата Шарпашри Борис Рябков.

Хастарсем пухса хатĕрленĕ сулла сўтсе Сергей Медниковăн машини çине тиерĕç. Вĕсем августăн 2-мĕшĕнче ирхи 6 сехетре тапранса тухса Хĕрлĕ Чутай районĕнчи Хватукасси çывăхĕнчи Сăр хĕррине çитсе сулла пуçтарма тĕв турĕç. «Станъял» сулă Сăр юханшывĕ тăрăх Хватукасси-Етĕрнери çĕнĕ кĕпер патĕнчен юхса анĕ. Ишевпе кану 2 кун та 3 каçа тăсăлĕ, 60 км тăршшĕ пулĕ. Александр Улеев ертсе пыракан команда, каçхине çыран хĕррине чарăнса палатăсенче канса илĕ, кăнтăрла ишеве малалла тăсĕ. «Тепĕр çул та тухатпăр сулăпа, урăх маршрутпа ишетпĕр», – пĕлтерчĕ Владимир Корейкин сулла машина çине тиесе çирĕплетнĕ хыççăн.

**НИКОЛАЙ СМИРНОВ, АТĂЛЪЯЛ**

• ХЫПАР-ХĂНАР

**АВГУСТĂН 19-21-МĔШĔСЕНЧЕ ШУПАШКАРТА ПĔТĔМ РАÇÇЕЙРИ ТĔРĔК ХАЛĂХĔСЕН «РАÇÇЕЙ ТĔРĔКĔСЕМ» ФЕСТИВАЛĔ ИРТЕТ.**

Асăннă проектăн тĕп тĕллевĕ – регионсен хушшинчи хутшăнусене аталанма пулăшасси, тĕрĕк халăхĕсен наци культура йăлисене аталантарасси, халăхсене пĕр чăмăра пĕтĕçтересси.

Фестиваль мероприятийĕсем интерактивлă форматпа тўрех Шупашкарти темиçе вырăнта иртеççĕ – Лакрей вăрманĕнче, «Салют» культура çуртĕнче тата ытти вырăнта. Хĕрлĕ лапам фестивалĕн тĕп площадки пулса тăрать. Унта театрализациленĕ представлени иртет, Раççей регионĕсенчи пултарулăх ушкăнĕсен концерчĕсемпе савăнтарĕç. Фестивале тĕрлĕ регионри тата çĕршыври пултарулăх ушкăнĕсем, Чăваш Енри наци пĕрлешĕвĕсем – пурĕ 240 ытла çын – хутшăнмалла. Хăнасен çĕршыври тĕрĕк халăхĕсен культурипе – карачай-балкарсен, ногайсен, кумыксен, пушкăртсен, тутарсен, казахсен тата ыт. те – паллашма май пур.

## Саламлатпăр



Кипеккассинче пурăнакан **Фадей Константинович КОНСТАНТИНОВА** августăн 1-мĕшĕнче 88 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр. Юман пек çирĕп сывлăх, чăваш сурпанĕ пек вăрăм ĕмĕр, пархатарлă кун-çул сунатпăр.

***Ачисемпе мăшăрĕсем, мăнукĕсем, кĕçĕн мăнукĕ.***

08-04



Ырă кăмăллă ĕçтешĕмĕре **Анжелика Витальевна ТИХОНОВĂНА** çуралнă кун ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Хальхи пекех, малашне те ĕçре çитĕнў хыççăн çитĕнў тумалла пултăр. Вăрăм ĕмĕр, ырлăх-сывлăх, телей, ăнăçу, юрату сунатпăр.

***Редакци коллективĕ.***

08-05

• СЫВĂ ПУРНĂÇ

**Августăн 1-мĕшĕнче Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Шупашкарти Маунтинбайк центрĕнче йывăр атлетикăпа Раççей чемпионатне савăнăçлă лару-тăрура уçнă çĕре хутшăннă. Унта çĕршыври 50 субъектран спортсменсемпе тренерсем килсе çитнĕ.**

Михаил Игнатьев Раççейри йывăр атлетика федерацийĕн ертўçисене Чăваш Енре çакăн пек пысăк спорт мероприятине йĕркелесе ирттерме шаннăшăн тав тунă.

«Физкультурăна тата массăллă спорта аталантарас енĕпе Раççейри ытти регионсен хушшинче Чăваш Республики пĕрремĕш вырăнта пырать. Паянхи куна илсен, Чăваш Енре пурăнакансенчен 40 проценчĕ кулленех хăйсен сывлăхне çирĕплетме физкультурăпа, спортпа туслă», – тенĕ вăл.

Раççейри йывăр атлетика федерацийĕн Президенчĕ Максим Агапитов республика ертўçине спорта аталантарма пысăк витĕм кўнĕшĕн тав тунă.

Чăваш Республикинче спортсменсем эрне хушши спортра хăйсен вăйне виçĕç. Мала тухнисем çĕршыв чысне çулталăк вĕçĕнче Анахайм хулинче хўтĕлĕç.

• РАЙОНТА

**Карачурари «Фиалка» ача садĕнче кирпĕч стенана йĕркене кĕртессипе юсав ĕçĕсем пыраççĕ.** Аса илтерер, унта çак кунсенче кирпĕч хунă стенан пĕчĕк пайĕ йăтăнса аннă. «Ку ачасем иртсе-çўрекен вырăн мар. Ушкăнсенчен пĕринче сантехникăна, канализаци тытăмĕн пăрăхĕсене улăштарнă, çĕнĕ кафель хунă. Унччен коммуникацисене стена ăшне тунăран конденсата пула стена арканнă та. Ача садне 2 эрнелĕхе юсав ĕçĕсене ирттерме хупнă вăхăтра стенана тасатса типĕтме условисем йĕркеленĕ. Стенана реставрацилеме укçа-тенкĕ пăхса хунă, санитарипе-техника помещенийĕсене тата асăннă стенана тулаш тата шал енчен СанПиН нормисемпе килĕшўллĕн йĕркелеме 200 пин ытла тенкĕ уйăрнă», – пĕлтерчĕ ача садĕн заведующийĕ Ирина Филиппова.

ШУТА ИЛМЕ
**Карачурари «Фиалка» ача садне 142 ача çўрет.**

## ÇАНТАЛĂК

www.meteorf.ru сайт пĕлтернĕ тăрăх

| | | | |
|---|---|---|---|
| Эрнекун ...Август, 4 | +24° | +16° | |
| Шăматкун ...Август, 5 | +24 ° | +16° | |
| Вырсарникун ...Август, 6 | +23 ° | +15° | |

| | | | |
|---|---|---|---|
| Август | 7 | Тунтикун | +24° |
| Август | 8 | Ытларикун | +22° |
| Август | 9 | Юнкун | +21° |
| Август | 10 | Кĕçнерникун | +19° |

валюта курсĕ 04.08.2017
$ 60,75
€ 71,95